Чебоксары Ц. Б. им. Горького 0

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ФЕВРАЛЬ 10 КĔÇНЕРНИКУН 33 (4846)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш çул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗçтӑвкомӗн хаçачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактӑрӑн 0—67
Ред. заместителӗн 0—88
Редакци секретарӗн 4—40
Дежурнӑйӑн 6—23

Стахановла уйӑхлӑха хастарлӑн иртерер

ПСК(б)П Обкомӗ йышӑннӑ тӑрӑх пайан-тан вӑрман хатӗрлевӗнче стахановла уйӑхлӑх пуçланать.

Вӑрман хатӗрлекен организацисен алличе плана вӑхӑтра тултарса пыма кирлӗ условисем пурте пур. Вӑрманта вӑйлӑ механизмсем, машинсем ӗçлеççӗ. Рационализациленӗ инструментсем нумай. Кирлӗ таран кадрсем хатӗрлеме те пысӑк майсем пулнӑ. Анчах ку таранччен хӗçсем вӑрман организацисем çав пуйан условисемпе начар усӑ курни çине кӑтартса параççӗ.

Чӑвашвӑрманпром тресчӗ 1937 çулти плана тултараймарӗ. Кӑçалхи 1-мӗш кварталӑн малтанхи уйӑхӗнче те хӑйӗн ӗçне лайӑхлатас йенӗпе мӗн чухлӗ те пулин палӑрмала улшӑнусем тӑваймарӗ. Вӑрман хатӗрлевӗ çапла ӳрӗк-сӳрӗк пырать. Квартӑл планне февралӗн 5-мӗшне хатӗрлессине 20,2 процент, турттарассине 23,5 процент çеç тултарнӑ. Механизациленӗ тата рационализациленӗ çулсем тӑрӑх турттарас планӑн 26,4 процентне çеç пурнӑçа кӗртнӗ.

Пуриншӗн те паллӑ: вӑрман хатӗрлекен организацисенче пулнӑ халӑх тӑшманӗсемпе сӑтӑрçӑсем вӑрман хуçалӑхне сахал мар сӑтӑр кӳнӗ. Вӗсене çапса арkатас йенӗпе чылай пысӑк ӗçсем туса иртернӗ. Анчах тӑшмансен сӑтӑрла ӗçсен йулашкисене пӗтересси кирлӗ пек пулса пымасть-ха.

Вӑрман организацисен руководителӗсем халӗ йаланах „ӗç вӑйӗ çитмест, районсем ӗç вӑйӗ памаççӗ", тесе йӑйкӑшаççӗ. Тӗрӗс, ӗç вӑйӗ çителӗксӗр. Районри организацисем вӑрман хатӗрлев йенӗпе начар ӗçлессӗ, тени те тӗрӗс. Анчах ӗç вӑйӗ çитменнишӗн никамран ытла вӑрман организацисем айӑплӑ. Вӑрманта ӗçлекенсем вальӧи ӗçлеме лайӑх условисем туса паманни, рабочисене ӗçре çирӗплетсе пыманни, вӗсен квалификацине ӳстерсе пыма тӑрӑшманни тата колхозсемпе таччӑн çыхӑнса ӗçлеменни—çаксем пайанхи куна та вӑрман хатӗрлевне пысӑк чӑрмав кӳрекен сӑлтавсем пулса тӑраççӗ.

Шӑмӑршӑ вӑрманпромхоз директорӗ Матвейев йулташ колхозсене тухсан: „Епӗр кӑçал вӑрманта ӗçлекенсем вальӧи лайӑх условисем турӑмӑр" тесе ӗнентерсе ӳрет. Çавӑн пек тунӑ вӑл Карабай Шӑмӑршӑри „Хӗрлӗ партизан" колхоз членӗсен пухӑвӗнче те. Колхозникӗсем хӑйсен пухӑвӗнче йышӑннине пурнӑçа кӗртме тепӗр куннех 31 çынтан бригадӑ организацилесе вӑрмана тухнӑ. Вӑрманта ӗç пачах та Матвейев каланӑ пек пулман. Вӑрманпромхоз работникӗсем колхозниксем çине çаврӑнса та пӑхман. Колхозниксем вырнаçмали барака шӑнса ларнӑ мӑк тултарнӑ пулнӑ. Выртмали вырӑнсем пулман. Вут хутса йарсан çӑмӑр çунӑ пек шыв тумланӑ.

Çӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пунктӗнче йулашки вӑхӑтра вӑрманта ӗçлекенсем çителӗклӗ пулнӑ. Февралӗн 4-мӗшӗнче çураннисем 560 çын ӗçлес вырӑнне 577 çын ӗçленӗ. Апла пулин те плана тултарайман. Мӗншӗн? Ӗçе кирлӗ пек организацилемен. Плана тултарса пыма 300 пӑчкӑ, 300 пуртӑ çитмест. Канашри базӑра пуртӑ-пӑчкӑ нумай пулин те, вӑрманпромхоз хӑйне кирлӗ таран илсе пыма васкамасть.

Вӑрман хатӗрлевӗ кайа йулса пыни пӗтӗм ӗçри тепӗр пысӑк çитменлӗхе кӑтартса парать. Вӑл çитменлӗх—вӑрман организацисем халӗ те кампанилле ӗçлес йӑларан тухманни, хӑйсен ӗçне политикла задачӑсемпе çыхӑнтарса организацилесе пыманни пулать.

ПСК(б)П Парти Тӗпкомӗ „Мускавпа Мускав облаçӗнчи предприйатисенчи стахановецсем чӗнсе каланӑ" пирки декабӗрте йышӑннӑ постановлени стахановла йухӑма йертсе пырас ӗçре йӑнӑшсем тӑвассинчен сыхлантарса, стахановла йухӑма çӗклентерсе пыма тӗрӗс çул кӑтартса парать.

„Стахановла йухӑмӑн ернисемпе уйӑхлӑхӗсем те,—тесе çырнӑ çав постановленире,—стахановла йухӑмӑн чи пӗчӗк пайне çеç çаврӑрса илекен рекордсменсене çеç мар, пур стахановецсене те тивмеле ерне йе уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче стахановецсен ретне сараси чи кирлӗ задачӑсенчен пӗри тесе шутламала..."

Стахановла уйӑхлӑхра уйрӑм рабочисене çеç мар, пӗтӗм бригадӑсене, вӑрманпунктӗсене, тракторла çулсене, вӑрманпромхозсене стахановла ӗçлекен тума пур ӗçсене те лайӑх организацилени кирлӗ. Стахановла уйӑхлӑхӑн малтанхи кунӗсенчех вӑрман касакансемпе турттаракансем, шоферсем, трактористсем хушшинче массӑлӑ-политикӑлӑ агитаци ӗçне вӑйлатни тӑрӑх социалисӑмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса йамала. Вӑрманта ӗçлекен кашни рабочине, колхозникe, йединоличникe умра тӑракан задачӑсем çинчен тӗплӗн ӑнлантарса памала.

Пирӗн камсене курса таппаиса ӗçлемели тӗслӗхсем питех те нумай. Çӗмӗрлери механизациленӗ вӑрманпунктӗнчи Халим Алимов бригади йалан пысӑк тӗслӗхсем парать. Унӑн бригади йанвар уйӑх планне 125 процент тултарнӑ. Вӑрнар вӑрманпромхозӗнчи Игнатйев йертсе пыракан бригадӑ Потехинпа Николайев шоферсем нормӑна уйӑхсерен тултарса пыраççӗ. Вӑрнар районӗнчи Щӗнер, Пӑрачкав районӗнчи „Победа" тата ытти нумай колхозсем хӑйсен квартӑлти планӗсене тултарасси патне çывхарса çитнӗ. Вӗсен опычӗсене пур майсемпе те сарса пымала. Ку ӗçре районти тата стена хаçачӗсен ответлӑ вырӑн йышӑнмала.

Парти райкомӗсемпе райӗçтӑвкомӗсем вӑрманпром тресчӗ панӑ заданисене кашни вӑрманпромхоз, вӑрманпунктчӗ, трактор-авто-çул тӑрӑх тултармала тӑвасси-шӗн ответлӑ.

Чӑваш вӑрманпром тресчӗн, райкомсемпе райӗçтӑвкомсен пӗтӗм колхозниксене, йединоличниксене ура çине тӑратса вӑрмана организациллӗн тухмала тӑвас пулать. Вӑрманти рабочисем хушшинче массӑлӑ-политикӑла ӗçпе стахановла йухӑма организацилеме партипе комсомол активне йамала. Вӑрман рабочисем хушшинче, колхозсенче пухусем туса, стахановла уйӑхлӑх çинчен ӑнлантарса памала. Лайӑх ӗçлекен стахановецсене, ударниксене ӗçре хавхалантарса пымала, лайӑххисен опычӗсене кайа йулакан участкӑсене куçармала. Кашни участкӑ вальӧи кулленхи заданисем парса, çав заданисене куллен кун çирӗппӗн пурнӑçа кӗртсе пымала тӑвас пулать. Çакӑн пек тусан епӗр уйӑхлӑх умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнаçлӑн пурнӑçа кӗртсе çитерме пултаратпӑр.

Стахановла уйӑхлӑх — вӑрман хатӗрлекен организацисен ӗçӗсене тӗрӗслемели уйӑхлӑх. Вӑрман организацисем вӑл тӗрӗслӳрен большевикла чыслӑхпа тухмала.

ССР Союзӗн Аслӑ Совет Президиумӗн УКАЗӖ

Г. И. Петровский йулташа Ленин орденӗпе наградӑласси çинчен

Пӗтӗм Украинӑри Ӗçтӑвакан Тӗп Комитет Председателӗ Г. И. ПЕТРОВСКИЙ йулташ утмӑл çул тултарнӑ май тата вӑл рабочи класпа хресченсем умӗнче калама çук пысӑк тава тивӗçлӗ ӗçсем тунине шута илсе, Григорий Иванович ПЕТРОВСКИЙ йулташа ЛЕНИН ОРДЕНӖПЕ наградӑлас.

ССР Союзӗн Аслӑ Совет Президиумӗн Председателӗ **М. КАЛИНИН.**

ССР Союзӗн Аслӑ Совет Президиумӗн секретарӗ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль.
1938 çулти февралӗн 8-мӗш.

Совет Союзӗ тӑрӑх

◆◆ Февралӗн 8-мӗшӗнче Сталинорa (Донбас) шахтӑ заведуйушчисен канашлувӗ хупӑннӑ. Канашлура трест управляйушчисемпе участка начальникӗсем пулнӑ. Канашлу Донбасуголь начальникӗ Фесенко йулташ шахтӑсене çуркуннехи-çуллахи вӑхӑта хатӗрлесси тата Нарком Л. М. Каганович йултaшан 1938 çулхи производствӑ план çинчен каларнӑ приказне пурнӑçа кӗртесси çинчен тунӑ доклада сӳтсе-йавнӑ.

◆◆ Февралӗн 10-мӗшӗнче Ленинградра Профсоюзсен Пӗтӗм Союзри Тӗп Совечӗ йенӗпе малти вырӑна тухассипе Пӗтӗм Союзри шахмӑтпа шашкӑ турнирӗ уçӑлать.

◆◆ Узбекистанри Кашка-Дарйинск округне кӗрекен 300 колхоз грузовик илме зайавкӑ панӑ. Колхозсем 40 машинӑ ытла илнӗ те ӗнтӗ.

◆◆ Минскра Белоруссии республикӗнчи йӗтӗн акса тӑвакан стахановецсемпе агрономсен канашлувӗ пулса иртнӗ. Канашлура 400 делегат ытла пулнӑ. Канашлува пухӑннисем Калинин облаçӗнчи йӗтӗн акса тӑвакансене гектартан пилӗк центнер йӗтӗн сӳсӗ туса илме социалисӑмлӑ ӑмӑртува чӗннӗ.

(ТАСС).

Слуцкри магнитла обсерватори пӗлтерни

Февралӗн 8-мӗшӗнче Мускав вӑхӑчӗпе 16 сехетре магнитлӑ вӑйлӑ тӑвӑл пуçланнӑ, çак тӑвӑл 2—3 кун хушши пырать пулмала. Проволокӑлӑ тата радио çыхӑну пӑсӑлма та пултарать. (ТАСС)

ССР Союзӗн Оборонӑ Халӑх Комиссариачӗн парти конференцийӗ

МУСКАВ, 8-II. ССР Союзӗн Оборонӑ Халӑх Комиссариачӗн центрти управленисен пӗрремӗш парти конференцийӗ хӑйӗн ӗçне петернӗ.

Конференци ӗçӗнче ССР Союзӗн Оборонӑ Халӑх Комиссарӗн заместителе Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Çарӗн Политуправлени начальникӗ—иккӗмӗш рангри çар комиссарӗ Л. З. Мехлис йулташ хутшӑнса ӗçлене тата сӑмах тухса каланӑ.

Конференци ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти Пленуме „Парти организацисен коммуниссене партирен кӑларнӑ чухнехи йӑнӑшӗсем çинчен, ПСК(б)Партинчен кӑларнисен апелляцисем çине формальна-бюрократла пӑхни çинчен тата çав çитменлӗхсене пӗтермели майсем çинчен" йышӑннӑ постановлени çинчен батальон комиссарӗ Шабалин йулташ тунӑ доклада итлесе, сӳтсе-йавнӑ.

Оборонӑ Халӑх Комиссариачӗн центрти управленисенчи коммуниссем ПСК(б)П Тӗпкомӗн Пленумӗ йышӑннӑ решенисене ырласа, Центрти партбюрова çителӗксӗр ӗçленӗшӗн, уйрӑм парти членӗсем çине чунсӑр-бюрократла пӑхнӑ фактсем чылай тунӑшӑн ПСК(б)П Тӗпкомӗн Пленумӗ хыççӑнга тунӑ йӑнӑшсене тӳрлетессипе пачах та пекех нимӗн те туманшӑн çивӗччӗн критикленӗ.

Оборонӑ Халӑх Комиссариачӗн большевикӗсем йышӑннӑ решенисенче ӗçре тунӑ йӑнӑшсене тӳрлетме тата ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти Пленумӗ панӑ кӑтартусене пурнӑçа кӗртме май паракан чылай татӑклӑ ӗçсем туса иртерме палӑртнӑ.

Парти Комиссии составне вӑрттӑн сасӑласа 11 çын суйланӑ.

Халӑхсен çулпуçӗ Сталин йулташ патне тата ССР Союзӗн Оборонӑ Халӑх Комиссарӗ Совет Союзӗн Маршалӗ Ворошилов йулташ патне пысӑк çекленӳпе саламлӑ çырусем йама йышӑннӑ.

(ТАСС).

ПАПАНИН ПӐРӖ ПАТНЕЛЕ

Папанин пӑрӗ патнеле кайакан суднӑсенчен февралӗн 8-мӗшӗнче Мускавра çакан пек радиограммӑсем илнӗ:

„МУРМАНЕЦ" БОРЧӖ, февралӗн 8-мӗш, ирхине 7 сехет. Координатсем—çурçӗр широтин 70 градус 06 минут тата хӗвеланӑç долготин 9 градус. Хӗвелтухӑç йенчен икӗ баллӑ çил вӗрет, чылайах пӗлӗтлӗ, сывлӑшри температурӑ 4 градус сивӗ.

„ТАЙМЫР" БОРЧӖ, февралӗн 8-мӗш, 12 сехет. Координатсем—çурçӗр широтин 72 градус 30 минут тата хӗвеланӑç долготин 3 градус. Çурçӗр-хӗвеланӑç йенеле çул тытатпӑр. Суднӑ ваклаиннӑ пӑрсем хушшинче пырать. Хӑвӑртлӑх—9 узел. Пурте йӗркелех.

„МУРМАН" БОРЧӖ, февралӗн 9-мӗш, ирхине 9 сехет. Координатсем—çурçӗр широтин 70 градус 25 минут тата хӗвелтухӑç долготин 31 градус 28 минут. Хӑвӑртлӑх—10 узел. Хӗвеланӑç йенчен 3 баллӑ çил вӗрет. Йӗри-тавра 20 мил курӑнать.

(ТАСС).

Гренланди пӑрӗсем патне

„ТАЙМЫР" БОРЧӖ, 8-II. (ТАСС). Хӗвеланӑç йенчен вӗрекен çил чарӑнса кӑнтӑр-хӗвелтухӑç йенчен вӗрме пуçларӗ те, хума чарса лартрӗ. „Таймыр" пӗр тӑхтамасӑр пӗтӗм хӑвӑртлӑхпа Гренланди пӑрӗсем патне кайрӗ. Долгота градусӗсем ноль меридианӗ патнеле хӑвӑрттӑн анаççӗ. Çурçӗр тӗлӗнче çурçӗр широтин 72 градус 03 минут тата хӗвелтухӑç долготин 8 градус 20 минут пултӑмӑр. Сывлӑшри температурӑ хӑвӑрт сивӗнсе пыни епӗр пӑрсем патне çывхарса пынине шанчӑклӑн кӑтартса парать. Пӑр татӑкӗсем патӗнче каç пулнӑ тӗле пулатпӑр пулӗ, тесе шутлатпӑр. Авиаушкӑн материаллӑ пайсене хатӗрлеме тытӑнать.

„Таймыр" çинчи експедици руководителӗ — Остальцев.

„Мурман" шанчӑклӑн малала пырать

„МУРМАН" БОРЧӖ, февралӗн 8-мӗш. (Радио. ТАСС-ӑн йатарласа кайнӑ корреспонденчӗ). 11—12 миль хӑвӑртлӑхпа шанчӑклӑн малала пыратпӑр. Çанталӑк аван. Çыранран вӑйсӑр çил вӗрет.

„Мурман" çинче карап çинчи пек йӗркелӗ пурнӑç пуçланчӗ. Пайан 14 сехетре карап çинчи радиссем „Таймырпа" çыхӑнчӗç тата материк çине радиограммӑсем параççӗ.

„Йермак" пӑрçӗмӗрене йусаса пӗтернӗ

КРОНШТАДТ, февралӗн 8-мӗш. (ТАСС). Февралӗн 8-мӗшӗнче каçхине „Йермак" пӑрçӗмӗрене йусаса пӗтернӗ. 19 сехетре „Йермак" тӑракан дока шыв кӗртнӗ.

„Йермак" докран тухсанах кӑмрӑк тултарать те, рейса тухса кайать.

„Йермак" çинчи радиоаппаратурӑ йӑлтах хатӗр тӑрать. Тӗрӗслесе пӑхсан передатчикпе прийомник калама çук паха ӗçлени палӑрнӑ. Тинӗсе тухсанах пӑрçӗмӗрен материкпе икӗ йенлӗ çыхӑну тытма, чи малтанах Ленинградри, Мурманскри тата Архангельскри радиостанцисемпе çыхӑну тытма пуçлать. Радиостанци кӗске тата вӑрӑм хумсем çинче ӗçлемӗле. „Йермак" çавӑн пекех „Таймырпа" тата „Мурманецпа", унтан Папанин лагерӗпе те çыхӑнать.

Йутçӗршывсенче

ВАШИНГТОН, 8-II. (ТАСС). Сенатор Кинг демократ Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен нейтралитечӗ çинчен кӑларнӑ саккуна улаштарасси çинчен саккун пройекчӗ сӗннӗ. Америкӑри Пӗрлешӳлӗ Штатсен нейтралитет саккунӗ агреççи тӑвакансемшӗн усӑллӑ, пӗчӗк, вӑйсӑр çӗршывсемшӗн усӑсӑр,—тенӗ Кинг.

ПАРИЖ, 8-II. (ТАСС). Еспан агентстви çапла пӗлтерет: Ӗнер каçпала Мадридра сиксе саланса кайнӑ икӗ вӑйлӑ сасӑ илтӗннӗ. Кайран çӑра тӗтӗм йупи курӑннӑ, çав тӗтӗм йупи пӑлхавçӑсен çарӗсем йышӑннӑ Университет хулинче Рубис институчӗ хыçӗнче çӳлеле улӑхнӑ. Кунта пӑлхавçӑсен тар нӳхрепӗсем темиçе те пулнӑ.

Кайран илнӗ сведенисем тӑрӑх, пӑлхавçӑсен икӗ тар нӳхрепӗ сиксе тухса кайнӑ пулнӑ.

ВЕНӐ, 8-II. (ТАСС). Белградра пир-авӑр тӗртекен рабочисем, пӗтӗмпе пин çынна йахӑн, 30 кун хушши забастовкӑ тунӑ хыççӑн ӗçукçине 20 процент ӳстерме пултарнӑ. Лешковац хулинче забастовкӑ тӑвакансем ӗçукçине хушма, рабочи комитета йышӑнма тата предприйатисенче санитари условисене аванлатма ыйтаççӗ. Турбетри (Боснийа) вӑрман касакан рабочисен икӗ ерне хушши пынӑ забастовки рабочисем çӗнтернипе пӗтнӗ. Вӗсем ӗçукçине ӳстерме тата усӑлӑрах коллективлӑ договор тутарма пултарнӑ.

◆◆ Нанкин районӗнче 250 пин китайец, йапонецсем хуçаланнине пула, выçӑ вилес хӑрушлӑх умӗнче тӑраççӗ.

◆◆ Англире кӑçалхи йанварӗн 17-мӗшне ӗççӗр тӑрса йулнисен хисепӗ 1.857 607 çын шутланать. Иртнӗ çулхи декабӗр уйӑхӗнчипе танлаштарсан ӗççӗррисен хисепӗ 162 пин çын ӳснӗ.

◆◆ Китай çарӗсем Китайра вӑрçӑ пуçланнӑранпа Йапонин 400 самольотне ытла персе ӳкернӗ. Кунсӑр пуçне китайецсем Йапонин çар карапӗсене 20 ытла шыва путарнӑ.

◆◆ Германире Францин „Тан" йатлӑ хаçатне сутма чарнӑ. Ӑна хальӧ çеç Германире йертсе пыракан çынсене арӗслени тата персе пӑрахни çинчен çырнӑ, тесе сутма чарнӑ.

◆◆ Америкӑри интеллигенцин—писателсен, артиссен тата ытти палла представителӗсем, мӗн пурӗ 470 çын, Рузвельт президентран пӑлхавçӑсем Барселонӑпа Валенси çине бомбӑсем пӑрахнине хирӗç протес пама ыйтнӑ. „Хӗрарӑмсемпе ачасене çавӑн пек тискеррӗн вӗлерни,—тенӗ ыйтура,—етемлӗх умӗнче чи пысӑк преступлени пулать". (ТАСС).

ПСК(б)П Обкомӗнче

Вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе стахановла уйӑхлӑх иртересси çинчен

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗ ПСК(б)П Тӗпкомӗ вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе стахановла уйӑхлӑх иртерессии çинчен йышӑннӑ решенине сӳтсе-йавса, февралӗн 10-мӗшне мартӑн 10-мӗш хушшинче вӑрман хатӗрлессипе турттарас тӗлӗшпе стахановла уйӑхлӑх иртерме йышӑнчӗ.

Парти Обкомӗ ку тӗлӗшпе парти райкомӗсене, райӗçтӑвкомсене тата вӑрманпромхозсене мӗнле ӗçлемеллине кӑтартупачӗ. Обком йышӑннӑ тӑрӑх парти райком секретарӗсен, райӗçтӑвком председателӗсен вӑрман хатӗрлев планӗсене кашни вӑрманпромхоз, кашни вӑрманпунктчӗ тӑрӑх тултарассишӗн вӑрманпромхоз руководителӗсемпе танах ответлӑ пулмала.

Парти райкомӗсемпе райӗçтӑвкомсен стахановла уйӑхлӑх иртерессине оперативлӑ йертсе пымала. Вӑрман хатӗрлес ӗçе рабочисене йышлӑн кӑларассине организацилемеле. Вӑрман ӗçӗнче ӗçлеме бригадӑсем тумала. Колхозсен бригадисене—колхоз председателӗн заместителӗ, йединоличниксен бригадисене—йалсовет президиумӗн членӗ йертсе пымала. Вӑл бригадӑсен плана тултараченех ӗçлемеле.

Парти райкомӗсен, райӗçтӑвкомӗсен, вӑрманпромхоз директорӗсен рабочисем хушшинче политикӑлӑ-массӑлӑ ӗçе вӑйлатса стахановла йухӑма анлӑн сармала, стахановецсен паха опычӗсене кайа йулнӑ участкӑсене куçармала. Вӑрман ӗçне хӑвӑрт тума май паракан инструментсемпе, ӗç хатӗрӗсемпе (лучковӑй пӑчкӑ, кроскот) пысӑккӑн усӑ курмала.

Парти Обкомӗ вырӑнта ӗçлекен рабочисен ӗçне тӗрӗс йӗркелеме хушать. Чӑваш вӑрманпромӑн вӑрман хатӗрлес ӗçре йалан-лӑха ӑста ӗçлекен квалификациллӗ кадрсем хатӗрлес тӗлӗшпе татӑклӑ, кирлӗ ӗçсем тумала. Вӑрманпромхоз, механизациленӗ вӑрманпунктчӗн директорӗсен вӑрман хатӗрлес тата турттарас тӗлӗшпе панӑ заданисене хисепе илсе, кашни вӑрман пункчӗ, çул, бригадӑ, тракторпа автоçул тӑрӑх кулленхи заданисене кӑтартса ӗç графикӗ тумала, вӑл графикӑна куллен-кун пурнӑçа çирӗппӗн кӗртсе пымала.

Парти райкомӗсен партипе комсомол активне вӑрман рабочисем хушшинче партилӗ, массӑлӑ тата политкӑлӑ ӗçе организацилеме йамала.

КИТАЙРИ ВӐРÇӐ

ВАТАМ КИТАЙРА

ШАНХАЙ, февралӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Ватам Китайра фронтӑн кӑнтӑр участкинче Ханчжоу хули районӗнче Китай çарӗсем вӑрçӑ ӗçӗсене ӑнаçлӑн сарса пыраççӗ. Февралӗн 6-мӗшӗнче Китай çарӗсем Йуйхан хули патне (Ханчжоуран хӗвеланаçнеле) çитсе тухнӑ, вӗсем йапонецсем йенчен артиллерирен пеннине пӑхмасӑрах атакӑна куçнӑ. Атакӑ тунипе Китай çарӗсем Йуйхан хулине çӗнӗрен илнӗ. Хулана илсе, китайецсем Йапонин кайала, хӗвелтухӑç йеннеле чакакан çарӗсене хӑваласа пыраççӗ.

Ханьчжоу районӗнче Китай çарӗсемпе партизансем активлӑн вӑрçнипе йапонецсем фронтӑн çар участкине çирӗплетеççӗ. Вӗсем тӑватӑ хӳтлӗхлӗ линисем тунӑ. Китайри пичет пӗлтернӗ тӑрӑх, хальхи вӑхӑтра Ханчжоу районӗнче Йапони çарӗсем 15 пин çынна çитеççӗ. Унта механизациленӗ тата сывлӑшран тапӑннине хирӗç кӗрешекен чаçсем те пур.

Ухy районӗнче (Нанкинран кӑнтӑрала) Китай çарӗсем икӗ йенчен—кӑнтӑр тата кӑнтӑрпа хӗвелтухӑç йенчен контрнаступлени туса пыраççӗ. Вӗсем Луцзйана (Ухy хулинчен кӑнтӑрарах) йышӑннӑ. Китай çарӗсен тепӗр колонни Ухy хули çине позицисен айккипе пырса атакӑлама кӑнтӑрпа хӗвелтухӑç йенчен пырса кӗнӗ.

ЛОНДОН, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Китай çарӗсем Ухy хули çине çӗнӗрен атакӑ тунӑ. Луцзйана илнӗ чухне Китай çарӗсем йапонецсенне çар хатӗрӗсем нумай туртса илнӗ.

Тяньцзйинь—Пукоу чукунçулӗн кӑнтӑр участкинче китайецсем йапонецсене хирӗç хӑватлӑ контрнаступлени тунӑ, ун чухне китайецсене çичӗ самольот пулӑшса пынӑ. Китай самольочӗсем Бенпу патӗнче Йапони позицисем çине калама çук хыттӑн бомбӑсем пӑрахнӑ.

ШАНХАЙ, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). „Дамейваньбао" хаçат пӗлтернӗ тӑрӑх, Китайӑн темиçе çӗр партизанӗсем, регулярнӑй çарсемпе пӗр пулса, Хайнин патнеле (Ханчжоуран çурçӗрпе хӗвеланаçнеле) пыраççӗ. Вӗсем йапонецсем çине тылран пырса атакӑлама шутлаççӗ. Çавӑн пекех партизансем Шанхай—Ханчжоу чукунçулӗ тӑрӑх активлӑн çапӑçса пыраççӗ. Февралӗн 3-мӗшӗнче вӗсем Сунцзйана йышӑннӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС) Рейтер агентствин Шанхайри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, февралӗн 8-мӗшӗнче Йапони самольочӗсем Ханькоу тата Ичан çине тапӑннӑ.

КӐНТӐР КИТАЙРА

ЛОНДОН, февралӗн 8-мӗшӗ (ТАСС). Рейтер агентстви Амойран пӗлтернӗ тӑрӑх, йулашки кунсенче Йапони авиацийӗ Амойа хули çине темиçе хутчен бомбӑсем пӑрахнӑ. Февралӗн 3—4 мӗшӗсенче бомбӑсем пӑрахсан, мирлӗ халӑх хушшинче 40 çын вилнӗ тата нумайӗшӗ аманнӑ. Февралӗн 4-мӗшӗнче Йапонин икӗ çар карапӗ Амойа форчӗсемпе радиостанци çине пенӗ. Анчах фортсенчен карапсем çине персен, вӗсем кайала чакнӑ.

Февралӗн 8-мӗшӗнче Амойа хулинчи влаçсем Йапонин Амойа портне блокадӑ тӑвакан тинӗс çар флочӗн командованийӗнчен ультиматум илнӗ. Ультиматумра: çывӑх кунсем хушшинче хулана йапонецсене ирӗклӗн памасан, сывлӑшран бомбӑсем пӑрахса хулана йалтах çӗмӗрмеле пулать,—тесе каланӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агетнствин корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Жемчужнайа йуханшыв йуппинсем хушшинче ларакан Чукчау йатлӑ хула, Йапонин тинӗс çинчи авиацийӗ бомбӑсем пӑрахнипе, йалтах ишӗлсе петнӗ.

Китай рабочийӗсем Йапони агреççипе кӗрешнӗ çӗрте

Китайра вӑрçӑ пуçланнӑранпах Китай рабочийӗсем Йапони агреççине хирӗç тӑрас кӗрешӗве пит активлӑн хутшӑнаççӗ. Йапонин Ханькоури, Шанхайри, Циндаори, Тяньцзинри, Кантонри тата ытти хуласенчи фабрикӑсенче ӗçлекен рабочисем Йапони çарӗсем иртнӗ çулхи август уйӑхӗнче Шанхай çине тапӑннине Йапонийе хирӗç тунӑ забастовкӑсен хумӗпе ответленӗ.

Вӑрçӑ пуçланнӑ хыççӑн малтанхи кунсенчех Шанхайри рабочисен пӗрремӗш ирӗклӗ отрйачӗ фронта тухса кайнӑ. Цзао Тун коммунис йертсе пынипе Бейпин районӗнче çапӑçакан мухтавлӑ партизан отрйачӗсем тата Тяньцзин районӗнче çапӑçакан партизан отрйачӗсем çурри ытла рабочисемпе студентсенчен тӑраççӗ. Шаньси, Хӗнань тата Хебей провинцисенче çапӑçакан нумай йышлӑ партизан отрйачӗсен чӑмӑрӗ те рабочисенчен тӑрать. Китайӑн чукунçулесем çинче ӗçлекен рабочисем уйрӑмӑнах паттӑрӑн çапӑçаççӗ Йапони авиацийӗ Китай чукунçулӗсем çине вӑйлӑн бомбӑсем пӑрахнине пӑхмасӑрах, Китайӑн чукунçул çинче ӗçлекен рабочийӗсем чукунçул çинче пойӑссем çӳрессине чарса лартмала мар тӑваççӗ.

Китай рабочисем ӗçукçи сахал илнине пӑхмасӑрах, Китай правителстви кӑларнӑ „Нациллӗ оборонӑ" займне сарас ӗçре пит активлӑн хутшӑнаççӗ.

Рабочисем çавнашкалах тата Йапони таварӗсене бойкот тӑвас ӗçре те пит активлӑн тӑраççӗ. Рабочи организацисем ытти общӗствӑлӑ организацисемпе пӗрле Йапони таварӗсемпе суту-илӳ тӑвакан магазинсене тупса палӑртаççӗ. Рабочисем Йапони таварӗсене илме хирӗçлеççӗ. Фабрикӑсене Йапони чӗрӗ таварӗсем пырсан, вӗсем ӗçлеме пӑрахаççӗ.

Рабочисем оборонӑ промышленнӑçне тунӑ çӗрте пит активлӑн хутшӑнаççӗ. Шанхайри нумай фабрикӑна çӗршыван варринчи районӗсене куçарнӑ. Вӑл фабрикӑсен оборудованисене рабочисем хӑйсем куçарнӑ. Вӗсем вӑл ӗçе пит тимлӗ те тирпейлӗ тунӑ. Куçаракан машинӑсене нимӗн те çӗмӗрмен.

Китайри рабочи клас Китай халӑхӗн нациллӗ ирӗклӗхӗшӗн кӗрешес çӗрте малта пыракан отрйад пулса тӑрать.

(ТАСС).

Тракторсене йусасси йулса пырать

Иртнĕ çулта республикăра чылай машинă-тракторлă станцисем тракторпа ĕçлемели плана ытлашшипех тултарчĕç. Трактор бригадисем пĕтĕм Сойузри социалисăмла ăмăртува хутшăнса стахановла ĕç тухăçлăхне кăтартрĕç. Патăрйелĕнчи машинă-тракторлă станцин В. Северов йулташ бригади 1937 çулта кашни трактор пуçне 1705 гектар сухаласа çулталăк планне 273 процент тултарнă. Шăхасанри машинă-тракторла станцин Тимофейев йулташ бригади 1226 гектар вырăнне 2061 гектар, Краснов бригади—3228 гектар сухаланă.

1937 çулта уйрăмăнах хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç. Тăвай МТС-чи Йевдокийа Кирилова тата Вăрнар МТС-чи Ефросийа Харитонова бригадисем урапалă пĕр трактор пуçне 900-шар гектар ĕçленĕ. Вĕсем, малта пыракан трактористкăсем, хĕрарăмсем ĕçлекен трактор бригадисен бригадирĕсем тата комбайнеркăсем Чăваш республикинчи пур трактористкăсене, комбайнеркăсене тата МТС-сенчи ытти работниксене 1938 çулта татах та лайăхрах ĕçлеме чĕнсе каланинче 1938 çулта „СТЗ“ трактор пуçне 1000 гектар тата „ЧТЗ“ трактор пуçне 3000 гектар ĕçлеме пулчĕç. Çакă вăл кашни трактористкăпа трактористăн шухăшĕ. Вĕсем пурте 1938 çулта ĕç тухăçне ӳстерĕсшĕн.

Анчах та ĕç ăнăçувĕ пĕтĕм трактор паркне çуракине вăхăтра хатĕрленнинчен, çуракине хатĕрленесси çинчен партипе правительствă кăтартса панисене большевикла пурнăçа кĕртсе пынинчен килет.

Шăхасан районĕнчи МТС тракторсене йусамали плана февралĕн 2-мĕшĕнче тултарса большевикла ĕç тĕслĕхне кăтартрĕ. Çав вăхăтрах, ытти МТС-сене илсен, тракторсене тата тракторпа ĕçлемели машинăсене йусас ĕç февраль уйăхĕнче каллех чарăнса ларни курăнать. Тӳрех каламала, тракторсене йусас ĕç чылай МТС-сенче пурнăçа кĕмесĕрех йулас хăрушлăх пĕрттесахалланман.

ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сводки тăрăх февралĕн 1-мĕшне тракторсене тĕпрен йусамали плана 61,4 процент, вăтам йулсав йенĕпе—56,3 процент тултарнă пулнă. Пилĕк кун хушшинче—йанварĕн 5-мĕшне тĕпрен йусамали плана тултарни 1,5 процент, вăтам ремонт йенĕпе 6 процент çеç ӳснĕ. Тракторсемпе ĕçлемели машинăсене—плугсемпе çейалкăсене йусас ĕçĕн хавăртлăхĕ те çавăн пекех. Малашне те ку ĕçре çавăн пек хăвăртлăх пулсан, тракторсене йусаса çитерме татах 3 уйăх вăхăт кирлĕ пулать.

Тракторсене йусас ĕçре уйрăмăнах çак районсем йулса пыраççĕ: Вăрмар (плана 45,8 процент тултарнă), Çĕрпӳ (54 процент), Йепреç (58,8 процент)—тĕпрен йусамали йенĕпе, Улатăр (50 процент), Шупашкар (54 процент)—вăтам йусав йенĕпе. Чикăна йулса пыраканни вăл—Пăрачкав МТС. Кунта тĕпрен йусамали плана 48 процент, вăтам йусамали плана мĕн пурĕ те 25 процент çеç тултарнă.

Чылай МТС-сем—Пăрачкав, Тутаркас трактор плугĕсене тата Патăрйел, Ишлей, Кувакино, Йелчĕк, Тутаркас, Трак районĕсенче çейалкăсене йусас ĕçе тытăнман та. Канашри машинă-трактор мастерскойĕнче те моторсене йусас ĕç пăчах чарăнса ларнă.

Мĕнрен килет-ха çав çуракине хатĕрленес ĕçре кирлĕрен те кирлĕ ĕç—тракторсемпе машинăсене йусас ĕç çавăн пек чарăнса ларни. ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ йанварĕн 9-мĕшĕнче йышăннă постановленире тракторсене йусас ĕçе хăвăртлатма кирли çинчен кăтартса панă хыççăн тракторсене йусас ĕçре йанвар уйăхĕнче улшăнусем пулнăччĕ. Çав улшăнусене кура МТС руководителĕсем тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн машинă-техникă пайĕнче ĕçлекенсем лăпланса ларнă. Хăшпĕр МТС-сем (Пăрачкав, Вăрмар т. ыт.) ĕçе пайан кунă та большевикла йĕркелесе çитереймен.

Тракторсене тата МТС-сенчи ытти машинăсене йусас ĕçре тататкалă улшăну, большевикла йĕркелĕх кирлĕ. Йулса пыракансен Шăхасанти машинă тракторла станцисенчен вĕренмеле. Акă мĕн калать Шăхасан МТС директорĕ Гнисейев йулташ:

— Тракторсене йусас ĕçе епĕр иртнĕ çуркуннеренех хатĕрленме тытăннă. Тракторсем валли пире пурĕ 3000 подшипник кирлĕ пулнă. Çав подшипниксене илме Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчен нарйад çитессе кĕтмесĕрех епĕр Горькири тата Мускаври заводсемпе çыхăнса тăрса хамăра кирлĕ таранах кӳрсе килтĕмĕр.

Тракторсене вăхăтра йусаса çитерме пире ĕçе тĕрĕс организацилени тата рабочисем хушшинче социалисăмла ăмăртува сарса йани пит нумай пулăшрĕ. Тракторсене йусакансем хушшинче политикăла-массăлă ĕçе те анлăн туса пынă. Кăçал пирĕн кашни тракторист хăйĕн тракторне йусас ĕçе хутшăнса ĕçлерĕ. Çапла туни ĕç пахалăхне ӳстерме те, тракторист трактор çинчен те лайăхрах вĕренсе йулма та май пачĕ. Кусемсĕр пуçне тата механик рационализаторла ĕçсем туни те тракторсене вăхăтра йусаса çитерме нумай пулăшрĕ.

Çапла ĕнтĕ, ĕçе тĕрĕс организацилени, социалисăмла ăмăртува анлăн сарни тата ĕçлекен çынсемшĕн тăрăшни ĕç планне вăхăтра тултарассинче чи кирлĕ услови пулса тăрать. Йулса пыракан МТС-сен çавна пĕртте манмала мар, ĕçе большевикла организацилесе тракторсене йусамали плана малта пыракан трактористкăсем чĕнсе каланинче палăртнă срука—мартăн 1-мĕшне тултармалах.

Организаци йышĕ ӳсет

ТРАК. Хозакассинчи Осоавиахим организацийĕ 1934 çултанпа ĕçлет. Ку организаци çумне кăçал нумай çĕнĕ членсем хутшăнчĕç. Осоавиахим членĕсем тăрăшнипе икĕ ернере пĕр номĕр стена хаçачĕ тухса тăрать.

С. Василйев.

Коммуниссен Шупашкар организацинчи пухувĕ

Февралĕн 8-мĕшĕнче коммуниссен Шупашкар организацинчи пухувĕ пулса иртрĕ. Пухура парти Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Иванов йулташ ПСК(б)П Тĕпком пленумĕ „Парти организацисен коммуниссене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апелляцисем çине формальнă-бӳрократла пăхни çинчен тата çав ситменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен“ доклад туса пачĕ.

Пирĕн парти, çавăн пекех чăваш парторганизаци те, Парти Тĕпкомĕн февраль-мартри Пленумĕ хыççăн, хăйĕн ретне фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсенчен, буржуалă националиссенчен тасатас тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕçсем туса иртерчĕ. Анчах, çак пысăк ĕçре йăнăшсем те пулнă. Айăпсăр коммуниссене ним сăлтавсăрах халăх тăшманĕсем вырăнне хурса, парти ретĕнчен те, ĕçрен те кăларса пăрахнисем пирĕн организацире те пулнă.

Пренире тухса калакансем: парти организацисем коммуниссене кашнине уйрăмăн илсе пăхас вырăнне, вĕсем çине формальнă-бӳрократла пăхнă фактсем çинчен, тата çавăн пекех Парти Обкомĕпе хула комитечĕн, „Красная Чувашия“, „Чăваш Коммунĕ“, „Колхозник йалавĕ“ хаçатсен ситменлĕхĕсене те критиклерĕç.

Парти Тĕпком Пленумĕ парти тăшманĕсемпе кĕрешессине темиçе хут вăйлатма хушать,—терĕ Василйева коммунистка. Анчах пирĕн парторганизацире халăх тăшманĕсемпе кĕрешес вырăнне, ним айăпсăр коммуниссене парти ретĕнчен кăларнисем те пулнă. Епĕ хама парти ретĕнчен тĕрĕс мар кăларни çинчен каласа кăтартасшăн. Ĕç çапла пулнă: манăн упăшкана шургвардейцăпа çыхăну тытнă тесе парти ретĕнчен кăларса пăрахнă. Кун çинчен епĕ ĕçлекен парторганизаци пĕлет те, ман çинчен ыйту лартать. „Унăн упăшки шургвардейцăпа çыхăну тытнă, арăмĕ упăшкипе çыхăну тытнă, çавăнпа та ăна партирен кăларас“ тесе решени йышăнаççĕ. Кунпа та çитмест, ĕçрен те кăларма тапăнаççĕ. Халĕ нумай пулмасть Шупашкарти хула комитечĕ упăшкапа иксĕмĕре те парти ретне кайала илмеле турĕ.

Мильутин заводĕнче ĕçлекен Ласточкина коммунистка çапла каларĕ:

—Парти Тĕпком Пленумĕ йышăнни питĕ тĕрĕс, тата вăхăтлă. Пирĕн парторганизацисем коммуниссене вĕренсе пулăшса пырас вырăнне, час-часах администрацилеççĕ, парти ретĕнчен те кăларса ывăтаççĕ. Пирĕн Николайевски парторг та çакăн пек методпа ĕçленĕ. Йулашки вăхăтра сырйо çитеймен пирки пирĕн завод планне тултарса пырайман. Çакăн хыççăн Николайевски парторг Андрейевски директора 24 сехет хушшинче заводри сăтăрçăсене тытса пĕтерсе завод ĕçне йĕркелесе йама хушнă, 24 сехет иртсен парторг коммуниссен пухăвне пухать те, унăн „директивне“ пурнăçламаншăн Андрейевски директора выговор памала тăвать. Тепĕр кунне парторг пуçне урăх шухăш пырса тивнĕ. „Выговор сахал, партирен кăлармала“, тенĕ вăл. Çав кунах коммуниссен пухуне пухнă, Андрейевски директора партирен кăларма йышăннă.

„Парторганизацисенче çакăн йышши тата ытти çавăн пек фактсем пурте чи малтан, коммуниссен хушшинче уйрăм карйерис-коммунисен, партирен кăларнипе, парти членĕсене хĕсĕрленипе паллă пулса мала тухма тăрăшакан, хăйсене сыхăлăх çителĕксĕр тесе айăпланасран пулма пултарасран парти членĕсене нимĕнле сăлтавсăр хĕсĕрленипе хăйсене тасапа кăларма тăрăшакан çынсем пур пирки, вĕсене ӳсса палăртса тăрă шыв çине кăларман пирки, сарăлнă“.

Пренире тухса калакансем пурте пĕр сасăпах Парти Тĕпкомĕн Пленумĕн решенине ырларĕç. Коммуниссем пленум решенине тĕрĕс ăнланнă, вĕсем парти организаци тунă йăнăшĕсене кĕске вăхăтрах тӳрлетме пулаççĕ. Çав вăхăтрах уйрăм коммуниссем пленум решенине тĕрĕс ăнланман. Ку пухура та палăрчĕ. Акă, Иурйев Н. йулташ ним сăлтавсăрах Парти Тĕпкомĕн Контроль Комиссии Чăваш республикĕнчи уполномоченнăйĕн ĕçне хурлама пăхрĕ. Ун шучĕпе пĕтĕм ситменлĕхсемшĕн партколлеги айăплă пулать.

Парти пухăвĕ ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕ йышăннă постановленине сӳтсе-йавнă тăрăх решени йышăнчĕ.

Республикăри колхозсем тăрăх

Вăрнар районĕнчи „Волонтор“ колхоз кăçал вăтам шутпа гектартан 120 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. Çав шутпа колхозниксем халь хĕрсех çуракине хатĕрленеççĕ. Колхоз вăрлăхсене суртласа çитернĕ, çĕре çемçетмелисене те чылай хатĕрленĕ. Халь торф турттарма тытăнаççĕ тата плугсене йусатаççĕ.

В. Иванов.

Партин XVI-мĕш сьесĕ йачĕпе тăракан Тукачри колхоз (Елĕк р.) вăрлахсене суртласа тасатса хучĕ. Колхозниксем халь хăшпĕр тырă вăрлăхне пĕрчĕн пĕрчĕн суйласа тасатаççĕ. Çĕре çемçетмелисене—тислĕк тата торф кăларса уйа купаласа лартрĕç. Анчах колхоз плугсене йусама тытăнман-ха. Çавăн пекех колхозăн сӳресене те халех хатĕрлеме тытăнмала.

Г. Андрейев.
И. Максимов.

Трак районĕнчи „Партизан“ колхоз çуракине йапăх хатĕрленет. Варлăхсене хатĕрлесе çитермен, машинăсене те йусаттарман. 4-мĕш бригадăсăр пуçне ытти бригадăсенче çĕре çемçетмелисене те хатĕрлемен.

И. Йегоров.

Ишлей районĕнчи „Восток“ колхозра 15 центнер кĕл пухнисĕр пуçне çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе урăх нимĕн те туман. Кĕлне те комсомолецсем пуçарнипе çеç пухнă. Колхоз председателĕ çуракине хатĕрленесси çинчен колхозниксене пухса пĕре те сӳтсе-йавман.

Б. Абрикосов.

Сурăмхĕрринчи (Трак р-нĕ) колхоз çамрăкĕсем кăçал вăрçăлă турăсăрсен кружокне организацилерĕç. Кружокра 15 çамрăк тăрать. Кружок руководителĕ Николайев членсемпе занятисем туса иртерет. Занятисем план тăрăх, вăхăтра пулса пыраççĕ. Кружок членĕсем халăх хушшинче тĕн сийенĕ çинчен лекцисем тăваççĕ, каласусем туса иртереççĕ.

Г. Абрамов.

Ыхракассинчи (Ишлей р.) Ольга Илйина йулташăн çичĕ ача. Вăл февралĕн 5-мĕшĕнче 2000 тенкĕ пособи илчĕ. Халĕ вăл ачисене ботинкăсем илсе пачĕ.

Г. Сергейев.

Бӳрократсем тата совет гражданинĕн прави çинчен

Вишневский, Николай Йаковлевич 1934 çул Карач йалĕнчи Сатрăк лавкине ĕçлеме кĕнĕ. Унта нумайах та ĕçлеймен вăл, виçĕ уйăхран ăна растратă тунăшăн судă парса ĕçрен кăларнă. Хăй вăхăтĕнче Вишневский йулташа ку ĕçсемшĕн тивĕçлипе айăпланă. Анчах Куславкка районĕнче ытлашши „сисемлĕ“ çынсем Вишневский йулташăн виçĕ çул кайарах пулнă йăнăшĕ çинчен пĕрмайах вырăнсăр аса илтерсе тăма тивĕçлĕ тесе шутлаççĕ.

Хăйĕн айăпне тавăрма пикенсе ĕçленине кура тата вăл вĕренме тăрăшнине кура, колхозниксем Вишневский йулташа бригадира вĕренме районри колхоз шкулне йараççĕ.

Колхозниксем шаннине кура Вишневский хĕпĕртет, вĕренме кайать. Анчах ăна колхоз шкулне илмеççĕ. Мĕншĕн? Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсен пĕр ответ:

— А, судпа айăпланнă, шанчăксăр çын. Вĕрентме йурамасть. Ир-ха.

Вишневский килĕшет, чăн та ир-ха, хам айăплă. Тăхтас. Вăл кӳренмест, киле таврăнать. Каллех колхозра чыслă ĕçлеме тытăнать.

1936 çул, октаберĕн 26-мĕшĕнче, колхозниксен пухăвĕ Вишневский йулташа фермă пуçлăхне лартать. Вăл ĕçлеме тытăнать. Фермă ĕçне лайăхлатасшăн хăйĕн вăйĕ тата пултарулăхĕ çитнĕ таран ĕçлеме тăрăшать. Пĕр уйăх иртсен; райçĕрĕç пайĕ Вишневскине фермă пуçлăхне лартнине пĕлет. Тепĕр кунне:

— Вишневскине фермă пуçлăхĕнчен халех хăтарма хушатпăр, вăл судпа айăпланнă, шанчăксăр çын,—тесе йатарласа хут çырса йараççĕ. Хучĕ айне райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Медйанин тата райçĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Лескин ала пуснă. Вĕсем хăйсен ирĕкĕпе колхозниксен пухăвĕ йышăннине пăрахăçа кăлараççĕ, Вишневскине колхоз правленин ларăвĕнче йе колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-йавмасăрах фермă пуçлăхĕнчен кăлартараççĕ.

Вишневский килĕшет. Чăн та, ун пек çынна ăçтан тӳррех фермă пуçлăхне, çавнашкал пысăк ĕçе шанса парăн? Мĕншĕн кӳренес? Хăй айăплă.

Те мăшкăласшăн, те ырă тăвасшăн, кам пĕлет ăна, анчах пирĕн шутпа ырă тăвасшăн, колхоз правленийĕ колхозниксемпе килĕшсе Вишневскине каллех трактористсен курсне вĕренме йама палăртать. Вишневский хĕпĕртенипе васкасах испытанине кайать, вĕренме кĕрет.

— А, Вишневский, судпа айăпланнă, шанчăксăр çын, вĕренме илме йурамасть. Ир-ха,—теççĕ райçĕрĕç пайĕнче ларакан Лескин тавраршĕсем.

Вишневский йулташ киле таврăнать. Куннĕнче кӳренет, хумханать, тертленсе те пăхать, анчах хăйĕн айăпне аса илсен пăшăрханмасть, килĕшет. Колхоза кайала таврăнать, ĕçлеме тытăнать.

1937 çулăн декабĕр уйăхĕнче Вишневскине каллех иккĕмĕш бригадăн бригадирне лартаççĕ. Бригадирта уйăха йахăн кăна ĕçлеме ĕлкĕрнĕ. Вишневский бригадиртан „хăй“ ирĕкĕпе тухать.

Çапла. Икĕ çул хушши ĕнтĕ тавăттăмĕш çул кайарах судпа айăпланнă çынран, 24 çулхи çамрăкран, Вишневский, Николай Йаковлевичрăн Куславкка райĕçтăвкомĕпе райçĕрпайĕнче ларакан чунсăр етемсем мăшкăлаççĕ. Вĕсем çака виçĕ çул хушшинче Вишневский хăйĕн айăпне тӳрĕ ĕçлесе тавăрасшăн тăрăшнине курсах, колхозниксен пухăвĕ йышăннă постановленисене хăйсен ирĕкĕпе пăрахăçлаççĕ; Вишневский йулташăн саккунлă прависене тӳртса илме йе пырса тĕкĕнме пăхаççĕ.

— Есĕр те, сирĕн учрежденисенче ĕçлекен работниксем те Вишневскийне йаланах вĕренӳрен тата колхозниксем шанса пана ĕçрен хăвăр ирĕкӳпе сирсе пына, мĕншĕн?—ыйтрăмăр райĕçтăвком председателĕнчен—Медйанин йулташран.

— Кахал вăл, ĕçлемест!—таврăчĕ Медйанин йулташ.

Тĕрĕс мар. Пирĕн шутпа кахал çын 1936 çулта, 9 уйăх хушшинче, 246 ĕçкунĕ, 1937 çулта—320 ĕçкунĕ ĕçлесе илеймен пулнă пулĕччĕ. Тата çакна аса илтермеле. Вишневский йул. 1937 çулта нумай вăхăт хушши Шупашкарпа Канаш чукунçул строительствинче ĕçленĕ. Уй-хир ĕçĕнче ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пынă. Вăл хăй тĕллĕн вĕренсе тырă выракан тата 6 лашапа ĕçлекен авăн çапакан машинсемпе ĕçлеме хăнăхса çитнĕ, счетоводăн ĕçне вĕреннĕ.

Виçĕ çул кайарах государствă умĕнче преступлени тунă Вишневский йулташ халăх ĕçне чĕререн йуратса тӳррĕн ĕçлемели тата пурнăçăн тĕрĕс çулĕ çине тăнă.

Медйанин йулташпа райçĕрĕçпайĕнче ларакан йулташсене çынăн кунçулĕ çине çакăн пек урлă пăхма кам ирĕк панă-ши?

Ыйтасчĕ, мĕншĕн тата мĕнле сăлтавпа 24 çулхи çамрăка, государства умĕнче тунă айăпне ĕçре кăтартнине тӳрлетме тăрăшакан, пурнăçăн тĕрĕс çулĕ çине тăнă çамрăка, виçĕ çул хушшиĕнтĕ „сутлашнă“ йатпа питлеççĕ?

Вишневский йулташ ССР Сойузĕн ирĕклĕ гражданинĕ. Унăн ĕçлев, кану, вĕренӳ прави пур. Вăл çав правасемпе пĕтĕмĕшпех усă курма тивĕçлĕ. Унăн прависене мĕнле те пулин тӳрĕмĕн йе айаккăн хĕснĕшĕн—саккун хытă айăплать. Унăн саккунлă прависене туртса илме йе пырса тĕкĕнме никам та пултараймасть.

„Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцийĕ çак ĕçе вырăна кайса тĕрĕслерĕ. Ăна ПСК(б)П Куславкка райкомĕн бюровĕ пăхса тухрĕ, Вишневский йулташ çине çакнашкал чунсăрла пăхнине сивлерĕ. Райĕçтăвкомпа райçĕрĕç пайне Вишневский йулташа ĕçлеме вĕрентме, унăн пултарулăхне кура ĕçре ӳстерсе пыма майсем туса пама хушрĕ.

М. Йакимов.

Коммунисăмăн малтанхи програмлă докуменчĕ

(„Коммунисла парти манифесĕ“ 90 çул тултарнă тĕле).

„Коммунисла парти манифесне“ çырнăранпа 90 çул иртрĕ. Çак произведени çинчен Ленин 1913 çулта çапла çырнă: манифестăн „мĕн пур тĕп вырăнĕсем халичченех тĕрĕс, вăл ĕнер çырнă пекех, чĕрĕ те пайанхи ĕç пек“. „Манифес“ хăйĕн пайанлăхне пайанхи кунчченех пĕр пĕрчĕ те çухатмарĕ. Икĕ тĕнче хушшинчи кĕрешӳ çивĕчленсе пынăçемĕн, Совет Сойузĕ тăшманĕсемпĕн хăрушлăх пулса тата хăйĕн тусĕсемшĕн савăнăç пулса—хăватланса пынăçемĕн, марксисăмăн „Манифесра“ пирвайхи хут çырса пĕлтернĕ аслă тĕрĕслĕхĕ вуншар та çĕршер мĕлйун çынсемшĕн çутăраххăн та çутăраххăн çунса тăрать.

„Манифес“ çутта тухнă вăхăтра Маркс 30 çула та çитеймен; Анчах вăл Енгельспа пĕрле—хăйĕн револьуцилĕ вĕрентĕвĕн никĕсне 1844—1845 çулсенчех ĕнтĕ туса хатĕрленĕ. Çав вăхăтран пуçласа Маркспа Енгельс хăйсем туса хатĕрленĕ вĕренӳве массăсем патне çитерессишĕн çине тăрса тата пĕр пăркаланмасăр кĕрешсе пыраççĕ. Аслăлăхлă коммунисăм никĕсне хывакансем—Маркспа Енгельс—рабочи класăн партине тăвакансем пулса тăраççĕ.

Çавăн пек партин пĕрремĕш отрйачĕ, унăн тĕвви „Коммуниссен сойузĕ“ пулнă. Вăл вăрттăн ĕçлекен, Германири, Францири, Англири тата Белгири 300—400 ытла мар малта пыракан рабочисемпе ремесленниксене пĕрлештерсе тăракан обществă пулнă; вăл обществăна Лондонра пурăнакан ытти çĕршывсенчен килнĕ рабочи-емигрантсем те тăнă.

Марксисăм хăйĕн малтанхи утăмĕсенчех партилĕ теори пулса тухса тăчĕ. Револьуцилĕ-пролетарилĕ партире тăрассин пĕррремĕш условийĕ—буржуазинчен татăклăн, та пĕтĕмĕшпех уйăрăлни пулать тесе пĕлтерне Маркс. Буржуази агенчĕсене, унăн ĕçне тăвакансене парти ретĕнчен пĕр шеллемесĕр хăваласа кăларса пымала: ăна тунипе парти вăйланать кăна, мĕншĕн тесен, „йăвăçăн хăрнă турачĕсене вăхăтра касса пăрахсан,—çырнă Маркс 1846 çулта,— вăл çирĕпленет тата лайăх çимĕçсем туса парать“.

Мĕн пек хытăн, мĕн пек хайаррăн тăрăннă Маркспа Енгельс вакбуржуалă социалисăмшăн тăракан карма-çăварсен мĕнпур тĕрлĕ ушкăнĕсем çине!

Марксисăмшăн пынă малтанхи çапăçусем хыççăн, „Сойуз справедливых“ йатлă вăрттăн ĕçлекен обществă, Маркспа Енгельс сĕннипе, хăйĕн йатне „Союз коммунистов“ йат парать, хăйĕн кивĕ: „пур çынсем те—тăвансем“ текен лозунгне хĕрӳлĕ çапăçăва чĕнекен: „Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!“ текен лозунгпа улăштарать. „Коммуниссен сойузĕ“ пĕр тавлашусăр Маркспа Енгельс йалавĕ айне тăрать. Халĕ ĕнтĕ вĕсем парти йачĕпе хăйсен йалавне пĕтĕмĕшпех анлăн сарса йама, тепĕр майлă каласан, марксисăмăн тĕп никĕсĕсем çинчен каласа вĕрентме пултарнă.

Сойузăн II-мĕш сйесĕнче, 1847 çулти нойабĕр—декабĕр уйăхĕсенче, Маркс сĕннĕ тĕп принципĕсене пĕркăмăллăн ырланă хыççăн, Маркспа Енгельса коммуниссен программине çырса хатĕрлесе, халăха пĕлме пичетлесе кăларма хушнă. Çапла çуралнă „коммунисла парти манифесĕ“.

***

Буржуалă философсем хăйсен задачине тĕнче мĕнле пулнине ăнлантарса пама пăхасси патне кăна çитернĕ; ĕçĕн тĕн вырăнĕ,—вĕрентнĕ Маркс,—тĕнчене улăштарассинче тăрать. Маркс хăйĕн умне пĕр задачине те, тепĕр задачине те лартнă. Вăл чи пирвайхи хут етемлĕх обществи ӳсес пынин саккунĕсене тупса уçрĕ, вăл чи пирвайхи хут етемлĕх истори çинчен ăслăлăхлă, тепĕр майлă каласан, пĕртен пĕр тĕрĕс ăнлантару пачĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Маркс тĕнчене улăштарас, етемлĕхе пур тĕрлĕ пусмăртан та хăтарас пĕртен пĕр тĕрĕс çула кăтартса пама пултарчĕ.

Пиншер çулсем хушши пусмăрлакансем тата пусмăр тӳсекенсем пурăннă. Експлоатацилекен классемпĕн тăракан тĕнпе ăслăлăх пиншер майсемпе: „çапла пулнă, çапла пулать,“—тесе кăшкăрашнă. Пĕчченсынсем, урăхрах та лайăх строй çинчен ĕмĕтленекенсем, мĕскĕн утописенчен сӳле хăпараймам. Пусмăртисен нумай ĕмĕрĕсем хушшинче пулнă мĕн пур восстанийĕсем, чи лайăх пулнă чухне те, експлоатацин пĕр формине тепĕр формăпа улăштарасси патне кăна илсе пынă.

Маркспа Енгельсăн пĕтĕм тĕнчешĕн историлĕ паха та пихсăн вилми ĕçĕ çакăнта „тăрать: вĕсем етемлĕх пухса пынă пĕтĕм пĕлӳлĕхĕн итогне тума пултарчĕç, пусмăрти классем пухса пынă пĕтĕм опыта пĕрлештерсе, тĕплĕн шухăшласа хатĕрлеме пултарчĕç, çавăн çине тайăнса експлоататорла стройа тата експлоататорла классене пĕтерме çул кăтартса пама пултарчĕç. Иртнĕ ĕмĕрĕн 30—40 çулĕсенче историлĕ аренă çине буржуазине валли тупăк хатĕрлекен—рабочи класс ӳсе тухрĕ, çавăнпа марксисăм та пăтса тухма пултарчĕ. „Манифес“ пысăк вырăн йышăнса тăни—çав документăн строкисенче пирвайхи хут марксисла теорийе, тепĕр майлă каласан, **буржуазийе мĕнле çĕнтермелли тата капиталисăма мĕнле пĕтермели çинчен калакан ăслăлăха,** анлăн çырса панинче пулать.

Буржуалă обществă, вуншар çулсем хушши çĕкленсе пырас вăхăтра пулнă. Анчах Маркс ун чухнех çак обществă вилĕм патне пынине витĕр курма пултарнă. „Манифесра“ капиталисăм кирек йепле пулсан та ӳсĕм çулĕ çинчи чăрмав, тĕнчене пушатса хăварма пултаракан варварствăна илсе пыраканĕ пулса тăрать, тесе ĕнентерсе кăтартса панă.

„Манифес“ капиталиссен класĕ тăхăннă пур маскăсене те пĕр шеллемесĕр сĕвсе пăрахать; буржуази мĕн пуррине пурне те капитала, укçа-тенкĕне пăхăнтарма тăрăшнине, вăл рабочисемпе хресченсене вăйхал тĕлĕшĕнчен тата идейă тĕлĕшĕнчен хăрса пĕтесси патнеле илсе пынине, вăл ĕççыннисен тивĕçлĕхĕпе пурнăçне йунпа пылчăк ăшне таптаса путарнине, вăл ăслăлăха пĕтерсе пынине, семйене муталанине, хĕрарăма чăлахлатнине Маркс хăватлăн кисретекен сăмахсемпе кăтартса панă. Анчах „Манифесра“ буржуалă обществă пурпĕрех пĕтессине те кăтартса панă. Буржуалă обществă хăйнĕ валли вилĕм илсе килекен тăшмана тата ӳлĕм хăйне çĕнтерекене—рабочи класа хăйех çуратать. Çав клас мĕн тума тăрăшнине кăтартса тăракансем—коммуниссем.

Коммуниссем пусмăрта пурăнакан пĕтĕм ĕçетемлĕхне чăн-чăн кĕрешӳ лозунгĕ параççĕ, хăйсем çав етемлĕхĕн малта пыракан боецĕсем пулса тăраççĕ. Коммуниссен тĕллевĕ—пур тĕрлĕ експлоатацине те пĕтересси. Унта каймали çул—коммунисла револьуци, çав револьуцин пĕррремĕш сăмахĕ—пролетарилĕ диктатурă тăвасси—„пролетариата пуçпулса тăракан клас туса хурасси, демократи çĕнтерсе илесси“ çинчен пулать.

Йепле тĕлĕнмеле те тĕплĕн палăртса хунă Маркс 90 çул кайарах пролетари диктатурĕн тĕп задачисене. „Пролетариат хăй политикăла пуçпулса тăнипе, — тенĕ „Манифесра“,—утăм хыççăн утăм туса буржуазирен пĕтĕм капитала туртса илес, производствăн мĕнпур хатĕрĕсене государствă, тепĕр майлă каласан, пуç пулса тăракан клас пулса организациленнĕ пролетариат аллинче централизацилес тата май пур таран хисепне ӳстерес тĕлĕшпе усă курать“. Револьуцилĕ ирĕксĕрлессипе усă курса, пролетари диктатурĕ „класла хирĕçӳсем пулма май паракан условисене“ хăйсене пĕтерессине пурнăçлать. Çав тĕллеве пурнăçлав тĕлĕшпе тăвакан ĕçсен хисепне Маркс „государствă фабрикăсен, производствă хатĕрĕсен хисепне ӳстерессине, акма çĕр тасатса хатĕрлессине тата пĕтĕмĕшле план тăрăх çĕрсен пахалăхне лайăхлатассине“ кĕртет.

„Манифес“ социалисăмла обществăра çĕрĕçĕ промышленнăçпа пĕрлешессине тата майĕпен хулапа йал хушшинчи хирĕçӳ пĕтессине малтанах витĕр кăтартать. Çак кĕрешӳ хыççăн, „классемлĕ тата класлă хирĕçӳлĕ кивĕ буржуалă обществă вырăнне ассоциаци йышăнать, ассоциацире кашни ирĕклĕн ӳссе пырассин, пурте ирĕклĕн ӳссе пырассин условийĕ пулса тăрать“.

Маркспа Енгельс „Манифесра“ рабочисене цехсенчех пăчăхтарма пăхнисене пурне те хирĕç çивĕччĕн те хайаррăн тухса калаççĕ. Маркспа Енгельс рабочи клас хăйпе пĕрле пĕтĕм халăха илсе пытăр тесе тăнă. Коммуниссен ирĕклĕхĕшĕн, демократишĕн, усăмлă-реакцилĕ ушкăнсемпе çынсене хирĕç кĕрешес çинчен сăмах пыракан çĕрте йаланах тата пур çĕрте те. демократилĕ лагĕр вăйĕсене йертсе пыракансем пулмала. „Манифесрах“ ĕçхресченĕсен тата пусмăрти халăхсен шанчăклă руководителĕ пулса тăракан рабочи класăн историлĕ пулас вырăнне кăтартса хăварнă.

„Манифесăн“ пĕр пысăк пайне феодалла тата пупла, буржуалă тата вак буржуалă суйа социалисăмăн пур йумахĕсене те вилмелех критиклесе çырнă. Çак пайра коммунисăмăн уйăрăлми йеппе—унăн вăрçăлăхне тата килĕшӳсĕрлĕхне палăртса хăварнă.

Маркспа Енгельс пролетариатăн малта пыракан отрйачĕ çинчен—унăн партийĕ çинчен тĕп кăтартусене çырса хăварнă. Рабочи клас хăй ирĕке тухассине партисăр пурнăçлаймасть тесе кăтартнă вĕсем. Вĕсем нихăçан та партин çапăçулă пултарулăхĕ вăл хăйĕн мĕн пур тăшманĕсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешсе пынинчен килет тенинчен кайала чакман. Ленинпа Сталин, рабочи клас партийĕ çинчен, унăн пролетарилĕ диктатурă системинчи вырăнĕ, унăн пурнăçпа ĕçри принципĕсем çинчен питех те пахан вĕрентекенсĕрсем, çавăн пек кĕрешӳ парти ӳссе тĕрекленессин саккунĕ пулса тăнине теорипе те, ĕçпе те кăтартса пачĕç. 1913 ç. Ленин: çав кĕрешӳре „вăтам лини“ пулма пултараймасть тесе çырнă, тата кам та пулин „рабочисем сутăнчăксен шайкине хирĕç пĕтĕçессине“ (тепĕр майлă каласан, меньшевик - ликвидаторсене тата Иудă-Троцкине хирĕç) пулăшма шутламасть пулсан, вăл вара хăйне „меньшевиксен-сволăçсен кампанине“ тыткăна лекнине кăтартса парать.

Парти тăшманĕсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешни, тăшмана вăл кирек йепла маскăпа витĕннĕ пулсан та тупса палартма пултарни, тăшмана туçран тата туса тăшманран уйăрса илме пултарни—ленинла-сталинла сăнарлă политикла деятелĕн уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Çакăн пек пĕр шеллемесĕр кĕрешесси Маркспа Енгельс, Ленинпа Сталин йалавĕ айĕнче тăрса çĕнтерне совет халăхĕн хальхи политикăлă моральле пĕрлĕхне туса хумали никĕс пулнă тата малала та пулать.

Ленин—Сталин партийĕ хăйĕн малтанхи утăмĕсенче тунă вăхăтрах, Ленинла „Искра“ вăхăчĕсенчен пуçласах хăйне „Коммуниссен сойузĕн“ ĕçĕсене туса пыраканĕ, „Манифесра“ палăртса хăварнă ĕçе малала туса пыраканĕ тесе

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çулхи йубилейĕ умĕн

Хатĕрленӳ ĕçĕ сарăлсах пырать

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ" корр.). Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă куна хатĕрленесси предприйатисемпе учрежденисенче саралсах пырать. Осоавиахим организацисем уйава кĕтсе хатĕрленнĕ май татăклă обйазателствăсем илеççĕ.

„Болшевик" заводри осоавиахим организацийĕ уйавчен 40 çынтан кайа мар осоавиахим членне йавăçтарма пулчĕ, 5 çын Ворошиловла тĕл перекенсен нормине тата 12 çын „ГТО" тата „ПВХО" значокĕсен нормисене парассине организациleме пулчĕ. Халĕ ĕнтĕ кусене пурнăçлассипе рабочисем хушшинче кружоксем ĕçлеççĕ. Иваницкайа йулташ йертсе пыракан „ПВХО" кружокĕнче 16 çын, ворошиловла тĕл пеме вĕренекенсен кружокĕнче—15 çын вĕренеççĕ. Пайанхи куна заводĕпе 12 çын „ГТО" значокăн хĕллехи нормисене, 4 çын ворошиловла тĕл перекенсен значок нормине пачĕç.

„Болшевик" заводри физкултура организацийĕ февралĕн 17-мĕшĕнче поход туса иртерет. Ку походра 17 çын пулаççĕ. Вĕсем шефа илнĕ Йегоркин колхозне кайса çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынипе паллашаççĕ, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнин уйавĕ çинчен бригадăсенче каласусем туса иртереççĕ. Çак походра пулнисемех колхозниксене концерт лартса кăтартаççĕ.

1-мĕшпе 2-мĕш №-лĕ вăтам шкулсенче те уйава хатĕрленесси пысăк хастарлăхпа пырать. Оборонă ĕçне вĕренессипе йатарласах кружоксем организациленĕ, нормăсене парасси те çирĕп план тăрăх пурнăçланса пырать. 2-мĕш №-лĕ шкулта çак йулашки 10 кун хушшинче „ГТО" значок нормине 20 ача ытла панă. Туллимар вăтам шкулти пионерсен вожатăйĕ Корнавилцева икĕ отрйадра Хĕрлĕ Çар пуçланса кайни çинчен каласусем туса иртерчĕ.

Клубсем уйав кунĕсенче вылйаса пама концертсемпе постановкăсем хатĕрлеççĕ.

Чăвашсен хорĕ олимпиадăна хутшăнать

Епĕр хамăр командăра иртнĕ кĕркунне красноармейецсен чăваш хорне организацилерĕмĕр. Ăна А. Иванов красноармейец йертсе пырать.

Кружок членĕсем ку ĕçе йуратаççĕ, занйатисене йĕркелĕ çӳреççĕ, çавăнпа хор ăнăçлăн ĕçлет. Пайанхи куна чылай йурасем тата лайăх йурлама вĕрентĕмĕр. Уйрăмăнах „Колхоз йуррине", „Туй йуррине" аван йурлатпăр.

Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă йатпа иртекен олимпиадăна хутшăнса епĕр хамăр пултарулăха кăтартса паратпăр. Малтан хамăрăн çар чаçĕнче, унтан гарнизонри смотрсĕнче пулса, икĕ хутчен сценă çинче йурларăмăр. Лайăх йурланăшăн хора халĕ облаçри олимпиадăна йама уйăрчĕç.

Пирĕн красноармейецсен чăваш хорĕ çитес кунсенче Ленинградра пулса, Хĕрлĕ Çар 20 çул тултарнă йатпа иртекен облаçри олимпиадăра хăйĕн пултарулăхне кăтартать.

Красноармейец Л. Алексейев.

Ăмăрту договăрне пурнăçлама

Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ çумĕнчи деткомиççи фабрикĕнчи рабочисен коллективĕ Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнине хатĕрленме тытăнчĕ. Ку йенпе фабрикри лайăх йĕлтĕрçĕсенчен 5 çынлă бригадă организацилесе, хăйсем иртнĕ çул деткомиççин Çемĕрлери, Мыслецри, Сĕнтĕрвăрринчи фабрикĕсемпе тунă социалисăмла ăмăрту договорне тĕрĕслесе тухма йачĕ. Унпа пĕрлех бригадă кăçал та вăл фабриксемпе ăмăртса ĕçлеме ăмăрту договăрĕ туса килет. Тата бригадă вал фабриксенче хамăрăн иртнĕ çулти ĕç опычĕсем çинчен каласа парать. Вырăнти çитменлĕхсене палăртса, вĕсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать, лайăх ĕçлекен стахановецсен паха ĕç опычĕсене деткомиççин ытти фабрикĕсене куçарма тăрăшать.

Зимин.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă йатпа ССРС Сыхăну Халăх Комиссариачĕ йубилейлă маркăсен серине кăларать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (çӳлте): „Сталин йулташ 1-мĕш Утлă çара пыни"; (айалта): „Граждăн вăрçин геройĕ В. И. Чапайев". В. Олейник репродукцийĕ (Сойузфото).

Уйав тĕлне çуракине хатĕрленсе çитетпĕр

ЕЛĔК. Хитекушкĕнчи „Çĕнĕ çул" колхозра Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă уйава мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илесси çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитетпĕр, терĕç. Тата февралĕн 23-мĕшĕнче колхозра вечĕр пулать. Унта тĕнчери лару-тăрусем çинчен доклад туса пама çын уйăрса хăварчĕç.

В. Йефремов.

Т[illegible]

пĕлтерчĕ.

Ленинпа Сталин марксисăма творчествăла ăнланса илсе ăна историлĕ çĕнĕ тапхăрти—империалисăмпа пролетарилĕ револйуцисен тапхăрĕнчи условисенче пур йенчен те ӳстерсе çĕнĕ те çӳлĕ пусăма çĕклерĕç. Вĕсем ăна коммунисăмăн пур тăшманĕсене те хирĕç,—народниксенчен, „вăрттăн мар ĕçлекен марксиссенчен" тата 90 çулсенчи „економиссенчен" пуçласа професçилĕ шпионсен тата çынвĕлерекенсен фашисла банди пулса тăнă троцкисла-бухаринла предателсем патне çитиех,—пынă хисепсĕр нумай кĕрешӳсенче сыхласа хăварчĕç.

Ленинпа Сталин марксисăма пролетариатăн клас кĕрешӳвĕнчи гигантла опычĕсене пĕрлештерсе кĕртсе пуйанлатрĕç тата çак никам çĕнтерейми теорипе вунпар мĕлйун çынсене хăçпăшалантарчĕç. 90 çул кайарах çынсен пĕчĕк ушкăнĕн програмла ыйтăвĕ кăна пулнă ĕç аслă Сталин йертсе пынипе халĕ пурнăçа кĕнĕ чăнлăх пулса тăчĕ. „Манифеса" Совет Сойузĕнче пурнăçа кĕртнĕ.

Болшевисăма алла илес тесе ĕçлекен çын кашнийех Маркспа тата Енгелспа çак пĕтех те паха ĕçне вулама тата темиçе хут та вулама, вĕренме тата пропагандăлама ывăнмасть. Çавăнпа пĕрлех совет çĕршывĕнчи кашни вулакан „Манифесăн" хавхалантаракан страницисем тепĕр аслă документăн, пирĕн тапхăрти документăн — Сталинла Конституцин статйисемпе таччăн çыхăнса тăнине хăвăртах туйса илет. Унта, „Манифесра", нумай вунăçулсем хушши кĕрешме программа палăртса хăварнă; кунта, сталинла Конституцире итогсене çирĕплетсе хунă, çирĕплĕнех çĕнтерсе илнĕ ĕçе, йăлана кĕнĕ ĕçе, кашни кунах ӳсекен тата тĕреклĕнекен ĕçе çырса хунă. „Коммунисла парти „Манифесĕ" патĕнчен Сталинла Конституци патне, пирĕн социалисăмла тăван çĕршывăн Тĕп Саккунĕ патне киле çул,—çакăн пек Маркспа Енгелс никĕс хывнă теорин çулĕ. Çакăн пек Маркспа Енгелс 90 çул кайарах пуçласа йанă ĕçĕн кунçулĕ.

Çак 90 çул хушшинче сахал мар шыв йухрĕ, сахал мар йун йухрĕ, тĕнче те ĕнтĕ пачах урăхла курăнать. Маркс буржуалă обществă пурпĕрех пĕтессин паллисене кăна курнă; пирĕн вăхăтра капиталисăм çĕрсе пыни пĕтĕм капиталисăмла тĕнчене мĕнпур ирсĕрсен купи туса хучĕ. Ун чухне, 1848 çулта, Маркс хыççăн коммуниссен тачă ушкăнĕ кăна пынă, халĕ тĕнчери чи аслă çĕршывра социалисăм—коммунисăмăн пĕрремĕш сыпăкĕ—чăнлăх пулса тăчĕ ĕнтĕ, çав çĕршыв хăйĕн тулашĕнчи вуншар мĕлйун ĕççыннисемшĕн образец тата çул кăтартса пыракан çăлтăр пулса тăрать.

Совет çыннисемшĕн тата пĕтĕм тĕнчери коммуниссемшĕн 1848 çулта кăларнă „Манифес" архив докуменчĕ мар, хисеплесе кантăк айĕнче сыхласа усрамали реликви мар. Çук, вăл—коммунисăмшăн пыракан револйуцилĕ кĕрешӳн чĕрĕ докуменчĕ, Марксăн, Енгелсăн, Ленинăн тата Сталинăн генийĕ тунă програмлă документсен вăрăм та мухтавлă сăнчăрĕн пĕрремĕш тĕвви, тата болшевиксемшĕн партилĕ саккун пулса тăрать.

Епĕр пурăнакан кунсенче „Коммунисла парти манифесĕ" пихăçанхинчен те ытла вăхăтлăн йанăрать. Вăл—совет чиккисен леш йенче халĕ те пуç пулса тăракан капиталисăмла варвăрствăна айăплакан хăйар акт пек йанăрать. Вăл халĕ те пусмăрта хĕн куракан халăхсемшĕн, фашисла тĕрмесене хупса лартнă халăхсемшĕн паттăрлăх парса йанăрать: вĕсемшĕн „Манифес" пирĕн тăван çĕршыв утнă çулпа пыма чĕнни пулса тăрать, пирĕн çĕршыв „Манифес" лозунгĕсене пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ.

Епĕр пурăнакан тапхăрта „Коммунисла парти манифесĕ" марксисăм-ленинисăм тĕрĕслĕхне çирĕппĕн кăтартса панă, совет çĕрĕ çинче чечекленсе саралнă пурнăçа тарăннăн та уççăн малтанласах витĕр курни пулса тăрать.

А. Зарецкий.

Пайан вăрман хатĕрлевĕнче стахановла вунăкунлăх пуçланать

Вăрман пункчĕсем ăмăртаççĕ

ВĂРНАР (телефон тăрăх). Вăрман хатĕрлевĕнче февралĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа стахановла уйăхлăх иртерессине вăрманпромхозри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем пысăк кăмăлпа ырлаççĕ. Вăрман касакансемпе турттаракансем, шоферсем, трактористсем тата инженерсемпе техниксем стахановла уйăхлăх задачисене сӳтсе йавас тĕлĕшпе иртекен пухусенче хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илеççĕ. Лайăх ĕçлеме конкретлă сĕнӳсем параççĕ.

Пинер вăрманпункчĕ Çарăклă вăрманпункчĕпе ăмăртăва тухрĕ. Вăрманпромхозри инженерсемпе техниксем Çĕмĕрле вăрманпунктĕнчи инженерсемпе техниксене ăмăртăва чĕнчĕç. Çарăклăри автоçул çинчи шоферсем кашнийех хăйсем çине обйазателствăсем илсе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеме тытăнчĕç.

Рабочисене техникă йенчен пулăшса пыма вăрманпромхозри кашни инженера, техника уйрăм участкăсем çумне çирĕплетнĕ. Стахановла уйăхлăхра пăчкăсем тата ытти инструментсем хăйрас ĕçе йĕркелĕн туса пыма пăчкă хăйракансене кĕске сруклă курсран 18 çынна вĕрентсе кăларнă. Вĕсене участкăсем çумне çирĕплетнĕ.

Производствăлă активлăх çĕкленсех пырать. Вăрманпромхоз стахановла уйăхлăх тапхарĕнче хăйумне 53 пин кубла метр йавăç хатĕрлесе 55 пин кубла метр турттарса кăларас задачăна лартать.

Стахановла йухăма вăйлатассишĕн

ЙĔПРЕÇ (телефон тăрăх). Стахановла уйăхлăха хатĕрленессипе вăрманпромхоз чылай ĕççене пурнăça кĕртрĕ. Вăрманпромхозра 4 трактор пур. Вĕсене пурне те йусаса ĕçе кĕртнĕ. Вунпĕр автомобилрен 9-шĕ йĕркелĕн ĕçлесе пыраççĕ. Тата икĕ автомобиле пайан-ыранах йусаса çитереççĕ. Ĕçхатĕрĕсене те йусаса йĕркеленĕ. Шыв вĕретмели баксене йусаса вырăнсене салатнă.

Стахановла ĕç меслечĕсене сарас тĕлĕшпе ĕçлекен инструкторсем хатĕрлеме кĕске сруклăх курс организациленĕ. Курсран вĕренсе тухнă инструкторсем участкăсенче ĕçлеме тытăнаççĕ.

Стахановла уйăхлăха хатĕрленни вăрманта ĕçлекенсен активлăхне пысăккăн çĕклерĕ. Рабочисем уйăхлăхра чан-чан стахановла ĕçлессишĕн кĕрешĕве тухаççĕ. Çавăн пекех колхозниксем те уйăхлăха активлăн хутшăнаççĕ. Шăнкăртам районĕнчи „Августăн 1-мĕшĕ" колхоз стахановла уйăхлăха хутшăнса ĕçлесе, хăйĕн планне Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă тĕле пурнăçа кĕртме пулчĕ. Çав районти „Майак" колхозран вăрманта ĕçлеме çуранисем 44 çын, лашалисем 34 çын тухрĕç.

Вăрманпромхозăн çĕнĕ руководстви иртнĕ вăхăтра пулнă йĕркесĕрлĕхсене пĕтерессишĕн хыта тăрăшать. Анчах чăвашвăрманпром руководителĕсем пулăшу парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Ишлейпе Тутаркас районĕсене ăмăртăва тухма чĕнетпĕр

Шупашкар райĕçтăвкомĕн йалсовет председателĕсемпе пĕрле пулса иртнĕ пленумĕ вăрман хатĕрлевĕ мĕнле пыни çинчен сӳтсе-йавнă хыççăн, стахановла уйăхлăха хутшăнма йышăнчĕ. Епĕр хамăр сезонри вăрман хатĕрлев планне: 23 пин кубла метр хатĕрлессине, механизациленĕ çулсем патне 30 пин кубла метр турттарса пырассине тата 8 пин кубла метр турттарса кăларассине пĕтĕмпех стахановла уйăхлăх хушшинче тултарма пулатпăр. Ăна пурнăça кĕртме вăрманта кашни кун çуранисем 385 çын, лашапа ĕçлекенсем 440 çын ĕçлемеле.

Епĕр Ишлейпа Тутаркас районĕсене Сезонри вăрман хатĕрлев планне стахановла уйăхлăх хушшинче, мартăн 10 мĕш тĕлне, пĕтĕмĕшпех тултарма пирĕнпе социалисăмла ăмăртăва тухма чĕнетпĕр.

Райĕçтăвком председателĕ—
Хабаров.

Малта пыракан колхозсем

ВĂРНАР. Районри чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕнче пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçленипе пысăк ӳсĕмсем турĕç. Шĕнер колхозĕ пĕрремĕш квартăлти вăрман турттарас плана йанвар уйăхĕнчех 290 процент тултарчĕ. Халхи вăхăтра ку колхозри колхозниксем хатĕрлес плана срукчен тултарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Уйкасри „Комсомолец" колхоз та паха тĕслĕхсем парать. Ку колхоз пĕрремĕш квартăлти турттарас плана йанвар уйăхĕнчех 106 процент пурнăçларĕ.

— Вăрман хатĕрлевĕ планне срукчен тултарни пире çуракине лайăх хатĕрленме майсем парать. Епĕр турттарас плана тултартăмăр. Халĕ пирĕн лашасем лайăх канаççĕ. Епĕр çуракине самăр лашасемпе тухса, ăна кĕске вăхăт хушшинче иртеретпĕр,—тет колхоз председателĕ.

Çавăн пекех вăрманта Аçăм çырми, Карачура, Малтикас колхозĕсем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем пайанхи куна квартăлти плана 50 процент ытла пурнăçланă.

Çав вăхăтрах начар ĕçлесе пыракан колхозсем те пур-ха. „Социалисăм" колхозăн пĕрремĕш квартăлта 600 кубла метр хатĕрлесе 677 кубла метр турттармала. Колхоз пайанхи куна çитсе пĕр кубла метр та хатĕрлемен, 34 кубла метр ытларах çеç турттарнă.

Вăрманта ĕçлекенсем сахал. Пĕрремĕш квартăлти плана срукра тултарма вăрманта куллен çуранисем 1000 çын, лашапа ĕçлекенсем 1200 çын ĕçлемеле. Пайанхи куна çуранисем 703 çын, лашапа ĕçлекенсем 457 çын çеç ĕçлеççĕ. Çавна пулах вăрманпромхозĕ йанвар уйăхĕнчи вăрман хатĕрлес тата турттарас плана 50 процент çеç тултарчĕ.

Вăрманта çын сахалли тата план тулманни вăрманпромхоз колхозсемпе таччăн çыхăнса ĕçлеменнинчен, вăрманта ĕçлекенсем хушшинче стахановла йухăма анлăн сарса пыманнинчен килет.

Вăрманта лайăх ĕçлекен колхозсен паха примерĕсем нумай. Вĕсен примерĕсемпе лайăх усă курни кирлĕ.

Ник. Козлов.

Хавасланса ĕçлеççĕ

Йанăш йалĕнчи (Елĕк р.) „Хĕрлĕ Сурăм" колхоз членĕсем кăçалхи вăрман хатĕрлев ĕçне хастарлăн хутшăнчĕç. Халĕ 22 колхозник çуран, 6 çын лашапа ĕçлеççĕ. Пайанхи кунччен вĕсем 329 кубла метр вутă хатĕрлерĕç. Ĕçре уйрăмăнах А. Филиппов, И. Данилов, С. Йеремейев йулташсем палăраççĕ. Вĕсем кашни кун нормăна 130 процентран кайа мар тултарса пыраççĕ.

В. Петров.

Плана ытлашшипех тултарчĕ

ЕЛĔК. Александровскинчи „Хĕрлĕ Сорм" колхоз вăрман хатĕрлес плана ытлашшипех тултарчĕ. Планпа 196 кубла метр вутă хатĕрлемеле пулнă пулсан, колхоз 260 кубла метр хатĕрлерĕ. Çавăн пекех турттарас плана та тултарнă.

П. Прокопйев.

Вĕренекенсем вăрманти рабочисем патĕнче

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинат çумĕнчи фабрик-завод шкулĕнче вĕренекенсем февралĕн 4-мĕшĕнче вăрманпункчĕн Кабанова участкинчи рабочисем патне кайса спектакл лартса кăтартрĕç. Спектакл пысăк хаваслăхпа иртрĕ.

Т. Иегоричева „Наш закон", В. Кутырйова „12 день декабря", Веселкина „Великому Сталину" сăвăсене каласа пачĕç.

Струнлă оркестр Рыжов йертсе пынипе ултă кĕвĕ вылйаса пачĕ.

Рабочисем çакăн пек концертсемпе татах пыма ыйтаççĕ.

И Йавский.

Çамрăк учителсемпе ĕçлемеççĕ

Елĕк районĕнче çамрăк учителсемпе ĕçлеме çĕ, вĕсене ĕçре пулăшмаççĕ. 1937—38 çулхи вĕренӳ çулĕн 1-мĕш çурçулĕнче районри çамрăк учителсене пухса пĕр канашлу та туса иртермен. Çамрăк учителсене ĕçре пулăшас вырăнне, райçутĕç пайĕн пуçлăхĕ Антонов вĕсене ĕçрен кăларса йарассипе хăратать. Вĕренӳ çулĕн 1-мĕш çурçулăхĕнче хăй ирĕкĕпе вăл 17 учителе нимĕн сăлтавсăрах ĕçрен кăларнă.

Çавăн пекех çамрăк учителсене пĕр вырăнта ĕçлеме памаççĕ, вĕсене час-часах пĕр шкултан тепĕр шкула куçараççĕ.

В. Алексейев.

Хаçатсене пăхса тухни

Массăпа тачă çыхăну тытмала

Парти Тĕпкомĕ пирĕн хаçатсене ĕççыннисемпе тачă çыхăну тытма, хаçат ĕçне промышленнăçри, йалхуçалăхĕнчи стахановецсене, ударниксене, инженерсемпе техниксене, врачсене, агрономсене, учителсене анлăн хутшăнтарма вĕрентет. Массăпа тачă çыхăну тытасси—болшевикла пичетĕн принципĕсенчен пĕри пулать.

Ĕçхалăхĕн производствăлă тата политикăла активлăхĕ вăйлăн ӳснĕ условире хаçатсем массăпа çыхăну тытассине çирĕплетсе малала сарасси питех те кирлĕ. Халĕ хулара та, йалта та çĕнĕ актив ӳссе, вĕренсе пырать. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласа иртернĕ кампанире халиччен обществăла ĕçре уйрăмах палăрса тăман çĕнĕ агитаторсемпе пропагандиссем ӳсрĕç. Вĕсем халăх хушшинчен тухнă талантсем, ĕçĕн организаторĕсем. Тата: халĕ промышленнăçра та, йулхуçалăхĕнче те стахановецсемпе ударниксен йышĕ ӳссе пырать, културă, искусствă фрончĕсенче те партипе Совет власĕн ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем нумай.

Хаçатсен хăйсен кулленхи ĕçĕнче çав актива çине тайăнмала та ĕнтĕ. Хаçатсен, çав шутрах Куславкка районĕнчи „Ленин йалавĕпе" хаçатăн та, хăйĕн автăрсен коллективĕ, ĕçйалкорсен активĕ пулмала. Хаçата рабочисемпе хресченсен, совет интеллигенцийĕн аллине кăлармала. Çакăн чухне çеç хаçат халăх умĕнче тивĕçлинех авторитетлă пулма пултарать.

Анчах Куславкка районĕнчи „Ленин йалавĕпе" хаçат çак болшевикла принципа пăхăнмасть. Вăл массăпа тачă çыхăну тытман хаçат. Çавăнпа та унăн страницисенче ĕçйалкорсен çырăвĕсем, стахановецсен, ударниксен, тĕрлĕ ĕçĕн специалисĕсен статйисемпе çырăвĕсем вайлă вырăн çук. Хаçата редакци коллективĕн пĕчĕк ушкăнĕ тата 10—12 çынтан тăракан йалкорсен ушкăнĕ çырнине тултараççĕ.

Нойабĕр—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хĕрсе хатĕрленнĕ вăхăт. Хаçатăн районри ĕççыннисен суйлав умĕнхи агитаци трибуни пулса тăмала пулнă. Анчах хаçат суйлав кампани вăхăтĕнче те массăпа тачă çыхăну тытман. Хаçатра пĕр агитатор, пропагандис, пĕр стахановец, ударник çырăвĕ çук. Нумайччен ытла хаçат Иванкай статйисемпе тулать. Нумай чухне çур хаçат унăн материалĕсемпе тулать. „Ленин йалавĕпе" хаçат декабĕрте те çакнашкалах, суйлав вăхăтĕнче палăрнă активиссене хаçат ĕçне хутшăнтарас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Редакцин авторсен коллективĕ çук пирки, массăпа тачă çыхăну тытман пирки, хаçат пур ыйтусене те Иванкайа çырттарма тăрăшать, ăна „пурне те пултаракан" журналис вырăнне туса хурать.

Хаçат районти пăлла çынсемпе çыхăну тытманни, вĕсене хаçат ĕçне хутшăнтарманни—ку тарапчен хаçата çырса тăнă ĕçйалкорсене тарăхтарать. Çакна епĕр Кузнецов йулташ çырăвĕнчен лайăх курма пултаратпăр. Вăл акă мĕн çырать:

„Куславкка районĕнчи „Ленин йалавĕпе" хаçат йаланах редакци сотрудникĕсем, чи малтан Иванкай çырнă материалсемпе пичетленсе тухать. Ĕçйалкорсен çырăвĕсем çине çавăрăнса та пăхмасть.

Ыйту парас килет: колхозниксем хаçата çырмаççĕ-ши? Çук мар, хаçата çыраççĕ, анчах вĕсем валли вырăн çук. Редакци сотрудникĕсем çеç çырса тултарни хаçат хакне çухатрĕ, хаçат колхозниксем умĕнче нимĕн авторитетсăр тăрса йулчĕ".

Кузнецов йулташ тĕрĕс çырать. Ку çыру „Ленин йалавĕпе" хаçата хытă айăплать, хаçатăн тĕп çитменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса парать. Хаçатăн çакăн çинчен тĕплĕн шухăшласа тĕрĕс вывăд тумала, массăпа тачă çыхăну тытмала. Хаçат районти пăлла çынсен материалĕсемпе тухса, халăх умĕнче авторитетлă пулмала. Ун чухне хаçатăн тиражĕ 900 екземплйар çеç мар, 3—4 хут ытларах пулĕ. Куславккасен çакна ăнланмала.

Пилешкассинчи ача çуратмали çурт

1936 çулта Пилешкассинче (Çĕмĕрле р-нĕ) ача çуратмали çурт уçнăччĕ. Çурт вичĕ пӳлĕмлĕ, пӳлĕмсем таса. Çак ача çуратмали çурта 6 йалти хĕрарăмсем ача çуратма пыраççĕ. Акушеркăра ĕçлекен Д. Арзамасова икĕ çул хушшинче 225 хĕрарăма ача çуратма пулăшу панă.

Халĕ ача çуратмали çурт уçăлнăранпа килсенче асапланса ача çуратакансем вуçех çук ĕнтĕ. Д. Арсамасова массă хушшинче авторитетлă. Хĕрарăмсемпе вăл ăшшăн калаçать, вĕсене хаçат-журналсенчен тĕрлĕ статйасем вуласа парать. Вăл Маркс, Ленин, Сталин кĕнекисене, Пушкин, Толстой, Некрасов, Горький тата ытти писателсен произведенийĕсене те вуласа, хăйĕн пĕлӳне ӳстерет. Кăçал комсомола кĕме шутлать. Халĕ комсомол уставне тĕплĕн вĕренме тытăнчĕ. Хаçат-журналсем çыранса илсе, пĕр номĕр сиктермесĕр вуласа пырать.

Унăн ĕмĕчĕ пысăк. Хăйĕн пĕлӳне татах ӳстерессшĕн. Çитес кĕркунне медицинă институтне вĕренме кĕме хатĕрленет.

Ив. М.

Клубĕ пур, ĕçĕ çук

ТУРХАН. Липăвкăри аластăлăх ертелĕн клубĕнче нимĕнле културăла-массăлă ĕç те çук. Култуработник пулса ĕçлекен Александров клуба пынă хаçат-журналсене вулама памасть, шкапа питĕрсе илет. Пушă вăхăта усăлă иртерме клубра биллиард, шашкă-шахмăт, икĕ ĕретлĕ купăс, пианико тата ыт. инструментсем те пулнă. Усă курма пĕлменнипе халĕ вĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Клуб çумĕнче кружоксем ĕçлемеççĕ. Култуработник Александров клубри ĕçпе вуçех интересленмест. Çавна шута илсе ертел членĕсен пухувĕнче Александрова ĕçрен кăларнăччĕ. Анчах Шартанов: „Епĕ културполитсовет председателĕ, ĕçе кама илес тетĕп, çавна ĕçлеме илетĕп", тесе ĕçрен кăларнăскерсене тепĕр хут ĕçе илет. Кун хыççăн Александров клубра ĕçлеме пачах пăрахрĕ.

Клубри ĕçе йĕркелемелех ĕнтĕ.

А. Покровский.

Трахомпа кĕрешес ĕç йапăх пырать

Трахомпа кĕрешес ĕç пысăк вырăн йышăнса тăрать пулсан та, Куславкка районĕнче ку ĕçе çителĕклĕ хакламаççĕ.

Тĕрлеме, Урасметйевă тата Касакăвă трахпункчĕсем таса мар, тĕттĕм, пĕчĕк пулĕмсенче вырнаçаççĕ.

Тĕрлемери трахпункт колхоз правлени çумĕнче пĕчĕк пулĕмре вырнаçать, çак пулĕмĕн калăпăшĕ 3,75 тваткăл метртан ытла мар.

Трахпунктсенче халатсем, алшăлисем тĕрлĕ кантăк посудăсем çукпа пĕрех. Хăш пĕр трахсестрасем хăйсен алшăлисемпе усă кураççĕ.

Кунсăр пуçне тĕрлĕрен кирлĕ плакатсем, кĕнекесем те çук. Йалсовечĕсем кирлĕ емелсене илме укçа вахăтра, çителĕклĕ парса тăмаççĕ.

Тĕрлемери тата Касакăври трахпунктсем 3—4 уйăх спиртсăр ĕçлеççĕ.

Урасметйевă трахпунктне 234 çын куç тӳрлетме çуремеле пулсан, пайанхи куна вĕсенчен 30—35 çын çеç çуреççĕ.

1937 çулта Урасметйевă йалсовечĕн сметтипе икĕ трахпункта тытса тăма 3187 тенкĕ пăхса хунă, 2473 тенкĕпе çеç усă курнă. Çав хушăрах унта ĕçлекен трахсестрасене Камчаткăпа Черновă йулташсене 1937 çулхи нойабер уйăхĕнчен вара ĕç укçи тӳлемен. Йалсовет председателĕ Архипов йулташ трахпунктсен ĕçĕсене лайăхлатасси çинчен аса та илмест.

Куславкка Райĕçтăвкомĕн сывлăха сыхлав пайĕн ку ĕçе йертсе пырассине вăйлатмала.

ЧАССР Тĕпĕçтăвком инструкторĕ

Федоров.

Ĕçлеме услови çук

Албахтинă йалсоветĕнче (Трак р-нĕ) икĕ трахпункт ĕçлет. Анчах йалсовет председателĕ Йефимов трахработниксене ĕçлеме кирлĕ услови туса памасть. Трахпунктсенче тас, рукомойник, шкап, сĕтелпукансем çук. Çаксем ĕнтĕ трахработниксене ĕçре чăрмантараççĕ. Трахработниксене декабĕр уйăхĕшĕн йалсовет ĕç укçи тӳлемесĕр тăрать.

Трахработниксене ĕçлеме йалсовечĕн çителĕклĕ услови туса памала.

Л. Киров.

Кашни хуçалăхах хаçат-журналлă

ЕЛĔК. Чăваш сурăм почтă уйрăмĕн почтайонĕ М. Орлов массă хушшинче хаçат-журнал сарассипе тăрăшса ĕçлет. Çак çулшăн вăл пурĕ 450 екземплйара йахан тĕрлĕрен хаçат-журнал сарчĕ. Уйрăмăнах колхозниксемпе йединоличниксем „Чăваш Коммунĕ", „Колхозник йалавĕ" хаçатсене ытларах çыранаççĕ.

Хаçат-журнал сарас ĕçре аван ĕçленĕшĕн иртнĕ çулсенче Орлов йулташ темиçе хут та преми илнĕ.

Халĕ вăл çӳрекен Актайпа Нĕрешри кашни хуçалăхах 2—3-шер екземплйар хаçат-журнал çыранса илет.

И. Астров.

Германири ĕçсем

ПРАГĂ, 8—II. (ТАСС). „Галоновины“ йатлă рабочи хăçат „Католикăлă центрăн“ вăрттăн ĕçлекен çыннисенчен илнĕ информацисем çине кăтартса, фашисла Германире пулакан хăшпĕр ĕçсем çинчен пĕлтерет. Чылай вырăнсенче,—тесе çырат хаçат,—питĕ çивчĕ лару-тăру пулнă. Хăшпĕр хуласенче урамри йĕркесĕрлĕхсем, демонстрацисем т. ыт. те. пулса иртнĕ.

Йанварĕн 31-мĕшпе февралĕн 1-мĕшĕнче хĕвелгухăçри Пруççире „Хурçă шлем“ организаци (фашиссем влаçа лараччен пулнă националиссен çапăçулă организацийĕ) членĕсем пулăнисене, кайран СС текен фашисла охранниксен отрйад не кĕнисене, пурне те хĕçпăшалсăрлантарнă тата вĕсене çирĕппĕн сăнаса тăма пуçланă. „Шталгелмовецсен“ пĕр ушкăнĕ казармасенче баррикадăсем туса, хĕçпăшалсене парасшăн мар татăклă хирĕçнĕ. Ĕç хире-хирĕç пересси патнех çитнĕ, 3 çын вилнĕ тата 11 çын аманнă.

Сывлăшри çапăçу

Испанирен пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 7-мĕшĕнче Теруел сывăхĕнче сывлăшра хайар çапăçу пуçланса кайнă. Вăл çапăçура икĕ йенчен çĕр самолот ытла хутшăннă.

Çав кунах пăлхавçăсен 6 самолочĕ Франципе Испани чиккинче Фигуерас хули çине бомбăсем пăрахнă. Вунă çын вилнĕ. Унта пăлхавçăсен самолочĕсем Вилйануева дел Хестру çине бомбăсем пăрахнă тата пассажир пуйăсĕ çине пулеметсенчен пенĕ. (ТАСС).

Партирен тĕрĕс мар кăларнисене партине тепĕр хут илнĕ

ЙОШКАР-ОЛА, февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). ПСК(б)П Тепкомĕ çумĕнчи Партилĕ Контрол Комиççийĕ Горьки облăçĕнчи парткоммегин вырăна тухса çÿрекен Комиççийĕн партирен кăларна комуниссен 52 зайавленине пăхса тухнă. 19 çынна парти членĕнчех хăварнă, 14 çынна партирен кăларнине çирĕплетнĕ, ыттисен ĕçĕсене тĕрĕслеççĕ. Апелйацисене пăхса тухнă чухне ПСК(б)П регенчен кăларна чухне çийелтен, чуххăмăн пăхнă фактсем палăртнă.

Тимлĕн ĕçлени курăнмаст

КАНАШ („Чăваш Коммунĕ“ корр.). Вагонсем йусакан завод кăçалхи çулăн йанвар уйăх планне тултараймарĕ. Цехсем тăрăх илсе пăхсан, механическипе кузнечнăй цехсем çеç уйăх планне тултарчĕç. Урапасем тăвакан цех плана пĕтĕмпе те 42,9 процент çеç тултарчĕ. Ку цех 1937 çулта та начар ĕçлесе пынă. Мĕн чармантарат-ха урапасем тăвакан цеха çителĕклĕн ĕçлеме?

Ку цехри Хаостовпа Татаринцев бригадисем кулленхи нормисене 160-шер процент тултарса ĕçлеççĕ. Тримак йулташ йертсе пыракан бригадă 20 мăшăр урапа туса кăларат. Çавăн пекех шейечнăй станок çинче ĕçлекен Йелисейев стахановец кашни куллен 8—10, Левашов—7—8, Александров йулташ 8—10 мăшăр урапа туса ĕç нормисене 200—250 процент таран тултараççĕ. Лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлекенсем ку цехра тата та пур. Анчах вĕсен опычĕсене сарассипе цехри администраципе профсойуз организацийĕ нимĕн те ĕçлемен пирки ĕç малала каймаст. Çакă ĕнтĕ начар ĕçленин пĕр сăлтавĕ. Çавăнпа стахановла йухăм та сарăлса пымаст. Уйăх хушшинче стахановецсемпе ударниксен йышĕ ÿсмен.

Урапасем тăвакан цех туса кăларакан продукци пахалăхĕ те начар. Час-часах брак туса кăлараççĕ. Акă февралĕн 1-мĕшĕнче цехĕпе 17 мăшăр йурăхсăр урапасем туса кăларнă. Вăл планпа туса кăлармалли продукцирен 51 процент шутланат.

Техникăна лайăх алла çавăрса илнĕ рабочисем браксене пĕтерессипе сĕнÿсем чылай панă. Сĕнÿсем тăрăх резецсене улăштармала. Ку тĕлĕшпе чертожсем кирлĕ. Чертожсем тума заводри техникла пай аллине панă. Вăхăт чылай иртрĕ ĕнтĕ, анчах техникла пай начальникĕ вырăнĕнче ĕçлекен Горбунов „часах пулат“, тесе çеç ларат. Техникăла пай пайанхи куна та резецсене улăштарассипе чертожсем тума тытăнман.

Хăшпĕр чухне урапа тума кирлĕ таварсем çителĕксĕр пулнă пирки, рабочисем ĕç вăхăтĕнчен 40—50 процентне ахал тăрса иртереççĕ. Кунсăр пуçне тата хăйракан станок патĕнче гран çукки те ĕç вăхатне йĕркелĕн усă курассине нумай чармантарат. Гран çук пирки вăхăтра материалсем илсе пымаççĕ, рабочисем ахал тăраççĕ. Електроенерги парасси те йапăх. Ку тĕлĕшпе пĕр урапасем тăвакан цех кăна мар, ытти цехсем те чылай чармав кураççĕ. Завод администрацийĕ електроенергипе тĕрĕс усă курассине ку тарана çитсе те йĕркелемен.

Çулте кăтартнă çитменлĕхсене ытти цехсенче те курма пулат. Калас пулат, товарнăй комбинатра та, ремонт маçтерскойĕнче те стахановла йухăм çав тери йапăх сарăлса пырат. Акă товарнăй комбинатра ĕç вырăнĕсене тĕрĕс организацилемен пирки рабочисем 3—4 сехетре туса пĕтермели ĕçех 5—6 сехете тăсаççĕ. Газогенератор, кислород т. ыт. те çителĕклĕ таран тăратмаççĕ. Çавăн пирки товарнăй комбинат йанвар уйăхĕнче 270 вагон йусаса катарас вырăнне, пĕтĕмпе те 173 вагон çеç йусаса кăларнă.

Заводри организацисем социалисăмлă ăмăртува сарса йарассипе ĕçлеме тытăнма çеç шутлаççĕ-ха. Договорсене тĕрĕслемен. Хăшпĕр цехри профоргсем пухусем туса иртерес тĕлĕшпе маçтăрсем çине çеç шанаççĕ. Вĕсем производствă йĕркипе интересленмеççĕ.

Çапла ĕçлесе пынипе те ĕнтĕ завод прорывра пырат. Руководителсемпе заводри организацисен çитменлĕхсене пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлеме тытăнмала.

Хар. Лисин.

Колхозăн клуб пулат

Кăташри (Йетĕрне р-нĕ) колхоз кăçал çĕнĕ клуб лартат. Клуба мартăн 8 мĕшне туса пĕтереççĕ. Колхозницăсем хĕрарăмсен праçникне—мартăн 8-мĕшне çĕнĕ клубра ирттерме шутлаççĕ.

П. Йванов.

Çĕнĕ йалсоветсем

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Йĕпреç районĕнчи Йĕпреç посолăкне, Йĕпреç тата Мăн Упакасси йалсоветĕсене уйăрса тата çĕнĕрен икĕ йалсовет организацилеме ирĕк панă. Вăл йалсоветсем Ворошиловский, Кировский йатлă пулаççĕ. Халĕ малтанхи 3 йалсовет вырăнне, пĕтĕмпе 5 йалсовет пулат.

Посолăк—Йĕпреç йалсовечĕ—центрĕ Йĕпреç посолкинче пулат. Йалсовета Йĕпреç посолăкĕ кĕрет. Йĕпреç йалсовечĕ—центрĕ Йĕпреç йалĕнче пулат. Йалсовета Йĕпреç, Хумпуç Патăрйел, Çĕрпÿйел, Кĕçен Патăр ел тата „Тымар“, „Огонек“, „Костер“ колхозсем кĕреççĕ. Ворошиловский йалсовечĕ—центрĕ „Партин 17-мĕш сйесĕ“ колхозра, унта Ворошилов йачĕпе. тăракан колхоз тата „Çĕнĕ пурнăç“, „Партин 17-мĕш сйесĕ“, „11-лет Чувашии“ „Новая жизнь“ колхозсем тата Кире, Орел, Параша йалсем тата Рыбтрест завочĕ кĕреççĕ. Мăн Упакасси йалсовечĕ—центрĕ Мăн Упакасси йалĕнче, унта Мăн Упакасси, Çен Упакасси, Шуркасси, Шибегечи тата Çĕнĕ Туçа йалĕсем кĕреççĕ.

Кировский йалсовечĕ—центрĕ Економ йалĕнче, унта Економ, Атăл, Бурсак, Таранвар йалĕсем тата Спотара завочĕ кĕреççĕ.

Ачасен техникăлă станцисен конкурсĕ

Шупашкарти ачасен техникăлă тĕп станцийĕ февралĕн 1-мĕшĕнче ачасен республикăри конкурсне пуçарса йачĕ. Ку станци Чăваш республикĕнчи 24 техникăлă станцине йертсе пырат. Çак станцисем пурте конкурса хутшăннă. Хăшпĕр районсенчи ачасен техникăлă станцийĕсем çак 1938 çулхи конкурса мĕнле хутшăнасси çинчен палăртнă та ĕнтĕ.

Акă Елĕкри ачасен техникăлă станцийĕ (директорĕ Максимов йулташ) çак конкурса 1 дирижабл, 1 електровоз, 1 електромотор, 1 трактор, 1 педаллĕ автомобил моделĕсем тата сывлăшран çыру сем салатакан 1 хут çĕлен тума хатĕрленет.

Республикăри ачасен техникăлă тĕп станци те 1938 çулхи конкурса нумай моделсем тăратма шутлат.

ССР Сойузĕнчи ачасен йслăлăхпа тата техникăпа интересленесси çулсеренех вăйланса пырат. Ачасем пурте хăйсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене ĕçре кăтартасшăн.

Вĕсен ĕмĕтне пурнăçа кĕртме кирлĕ условисене пурне те туса панă. Государствă моделсемпе кирлĕ хатĕрсене кÿрсе килмешкĕн станцăна укçа тенкĕ йенчен çителĕклĕ пулăшат. Çавăнпа та техникăлă станци çулсерен ачасене хăйне нумайрах та нумайрах йавăçтарса пырат. Техникăлă станци конкурса „ЦАГИ“ самолот моделĕ—25, бензинпа ĕçлекен моторлă самолотсен моделĕсем 4, планер—3, дирижабл—1, метро електровоз—2, динамомашинă—3, детекторлă радиоприйомник моделĕсем—4 тăратат тата Шупашкар хулине кăтартакан фотоалбом туса хатĕрлет.

Арк. Нестеров.

Колхозри шавлă оркестăр

ИШЛЕЙ. Таранçырмари „Комбайн“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш комсомол организацинчи комсомолецсем пуçарнипе 20 çамрăкран шавлă оркестăр организациленĕ.

Шавлă оркестăр хăйĕн ĕçне лайăх пурнăçласа пырат. Халĕ 25 тĕслĕ тĕрлĕ кĕвĕ калама вĕреннĕ.

Февралĕн 4-мĕшĕнче, каçхине, шавлă оркестăр Çĕрпÿ районĕнчи Сĕлескер йалне кайса вылйаса пачĕ. Унта курма чукунçул çинче ĕçлекенсем тата çывăхри йалсенчен пурĕ 400 çынна йахăн пухăнчĕç. Шавлă оркестăр 15 тĕслĕ кĕвĕ вылйаса пачĕ. Кунсăр пуçне Ф. Зарубин хăй тунă хут купăсĕпе тĕрлĕрен илемлĕ йурăсемпе кĕвĕсем каласа кăтартрĕ.

Шавлă оркестăрăн икĕ хуткупăс, икĕ скрипкă, пĕр гитар, балалайкă, барабан, бубĕн тата ытти музыкă инструменчĕсем те пур.

Н. Зарубин килйышĕнчен пиллĕкĕн вылаççĕ. Аслă ывăлĕ—Данил кленчесем çапса кĕвĕсем калат, йурăсем йурлат, Филипп срипкăпа, Михаил гитарпа вылят, вăлах шавлă оркестăрăн руководителĕ, Виктор шăхлич калат, кĕçĕн ывăлĕ—Васили бубĕн çапма пит ăста. Вĕсем хăйсен пултарулăхĕсемпе пĕтĕм колхозниксене савăнтараççĕ.

„Комбайн“ колхоз çумĕнчи шавлă оркестăр илемлĕ кĕвĕсем, йурăсем калама малала тата лайăхрах вĕренет. Халĕ вĕсем хăйсен пултарулăхне Шупашкарти радио станци урлă республикăри мĕн пур ĕççыннисене кăтартма хатĕрленеççĕ.

Гер. Шчербаков.

Илемлĕ литературă вулакансен шучĕ ÿсет

Шупашкарти М. Горький йачĕпе тăракан тĕп бибиотекăра вулакансен шучĕ ÿссех пырат. Библиотекă 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче 3342 кĕнеке вулама панă пулсан, кăçалхи йанвар уйăхĕнче 4143 кĕнеке вулама панă.

Вулакансем уйрăмăнах илемлĕ литературă нумай ыйтаççĕ. Йанвар уйăхĕнче библиотекăран илемлĕ литературурă кĕнеки 3490 панă. Вулакансем М. Горькин „Мать“, „Дело Артамановых“, „На дне“, А. Толстойăн „Петр Первый“, Шота Руставелин „Витязь в тигровой шкуре“, Н. Островскин „Как закалялась сталь“, „Рожденные бурей“ кĕнекесене нумайтарах ыйтаççĕ.

М. Исайев.

Пушă вăхăта усăлă иртереççĕ

Шупашкарти йуридически шкулти студентсем кану кунĕсенче вăхăта усăлă иртереççĕ. Кану кунĕсенче студентсем коллективпа Атăл лешйенне йĕлтĕрпе йарăнма кайаççĕ. Шкул çумĕнче фото, шашкă-шахмăт кружокĕсем ĕçлеççĕ. Шашкăпа вылякансен халĕ иккĕмĕш турнирĕ пырат. Турнира 12 студент хутшăннă.

Шкул çумĕнчи МОПР, СВБ, осоавиахим организацисем те йĕркелĕ ĕçлеççĕ.

С. Йефимов.

Заметкăсем тăрăх

„Тÿрлетме май çук“

„Чăваш Коммунĕ“ редакцине Тăвай районĕнчи Вырăс Нăрваш болницинче ĕçлекен врач çинчен çырнă заметкă килнĕччĕ.

Болницăра ĕçлекен врач ĕç вăхăтĕнче ÿсĕр пулса хăй ĕçне кирлĕ пек туса пымаст. Сывалма пынă çынсемпе мĕн калаçнине çавăнтах манса пырат. Хăшпĕр сывмар çынсене—„Есĕ кунта мĕн тума килтĕн, сана пăхмастăп“,—тесе хăй кабинетĕнчен кÿрентерсе кăларса йарат. Сывалма пынă çынсем врач ларакан кабинет алăкĕ патне пырса кĕмесĕр хăраса анчах тăраççĕ. Сывмар çынсем патне чĕннипе йала кайсан йалтнах ĕçсе ÿсĕрĕлсе килет. Çитменнине тата болницăна сайра хутран çеç пырат. Ĕçпе кайатăп тесе улталаса хăнаран хăнана çÿресе вăхăта иртерет, тесе çырнăччĕ.

Заметкăна Тавай районĕнчи сывлăха сыхлав пайне тĕрĕслеме йарсан, сывлаха сыхлав пайĕн заведуйущийĕ Мукина йулташ акă мĕн пĕлтерет:

„Гурйев врач ĕçленĕ çĕре ÿсĕр пырат, анчах ура çине тăраймиех ÿсĕр теме çук. Сывмар çынсемпе хирĕçкелет. Йала чĕннипе кайсан, унтан чăнах та ÿсĕр килет. Кун пек ĕçсе çÿренĕшĕн ăна темиçе те асăрхаттарнă, анчах тÿрлетме май çук“.

Тĕлĕнмеле, ытла та тĕлĕнмеле. Сывмар çынсене темĕнле чиртен те сыватаççĕ, чипер ырă сывлăхлă Гурйев врача тÿрлетме май тупаймаççĕ.

Паллах, кунта районри сывлăха сыхлав пайĕ хăй вăйсăррине кăна кăтартнă. Йĕркерен тухнă çынна вăхăтра тÿрлетменнипе ăна тата ытларах йĕркесĕрленме май туса парат.

Анчах, çав вăхăтрах, Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариачĕ ним шарламасăр ларни ытла та тĕлĕнтерет.

Трахпунктсен ĕçне вăйлатмала

Йулашки вăхăтра чылай трахработниксем хăйсен ĕçне вăрахлатни палăрат.

Шарыпкăри (Елĕк р-нĕ) трахпунктри трахработник Иванов йалти халăва сыватас тĕлĕшпе вуçех ĕçлемест. Хăй ĕçлекен йалсенче миçе çын трахомла чирленине те тĕплĕн пĕлмест. Трахпункта çителĕклĕ ĕçлетерес пирки йалсовечĕ те интересленмест, трахпункта пулăшмаст. Хутма вутă çуккипе йанвар уйăхĕнче трахпункт уйăхĕпех хупăнса ларнă.

Çĕнĕ Чурашри (Йĕпреç р-нĕ) туллимар вăтам шкулта 6-мĕш класра 18 ача трахомлă. Анчах трахработник И. Тимофейев вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа та шкула пырса ачасен куçĕсене пăхман, вĕ ене трахомран сыватма тăрăшман. Колхозниксемпе йединоличниксем трахпункта пырсан, халĕ емел çук тесе вĕсене кăларса йанисем те час-часах пулкалаççĕ. Емел пур, анчах Тимофейев ĕçлеме ÿркенет.

Çак тискер инкеке трахома тĕппипех пĕтерессишĕн трахработниксен нихçанхинчен те вăйлăрах ĕçлемеле.

Хут пĕлменлĕхе пĕтереççĕ

Кăçал çĕнĕрен шута илсе тухнă хыççăн, Нăрвашра (Тавай районĕ.) хутла пĕлменнисем 57 çын тата хутла сахал пĕлекенсем 27 çын тупăннă. Вĕсене хал пурне те вĕрентме пуçланă. Пушайев комсомолец 27 çынна вĕрентсе кăларчĕ. Ыттисене те çитес çывăх вăхăтрах вĕрентсе кăлармала.

К. Лазарев.

Кружоксем лайăх ĕçлеççĕ

ВĂРМАР. Шăплатра вулав çуртĕ ĕçлеме тытăннăранпа колхозниксемпе йединоличниксем каçсеренех вулав çуртне пухăнса пушă вăхăта усăлă иртереççĕ. Вулав çуртĕ хаçат-журналсем çителĕклĕ çырăнса илет. Биллиард, домино, шашкă-шахмăт вăйа хатĕрĕсем те пур.

И. Николайев.

Вулав çуртĕнче

ТРАК. Енĕшкассинчи „Стрела“ аласталăх ертелĕ çумĕнче кăçал хор, драмă, ташă кружокĕсене организацилерĕç.

Хор кружокне иртнĕ çулта Шупашкарти халăх творчестви çуртĕ çумĕнчи курсран вĕренсе тухнă Иванов йулташ йертсе пырат.

Драмă кружок членĕсем „Йуратури прорыв“ пйессăна Выççалкă йалне кайса лартма хатĕрленеççĕ.

Р. Филиппов.

Кулработниксем вĕрентсе кăларчĕç

Пишпÿлек райсутĕçпайĕ февралĕн 1-мĕшĕнче 15 кунлă курсран вулав çурчĕсен пуçлăхĕсене 19 çын, културă работникĕсене 14 çын вĕрентсе кăларчĕ.

Курсран вĕренсе тухнисем колхозсенче културлă-массăлă ĕçе лайăхлатма сăмах парса, колхозсене саланчĕç.

А. Ф. Алексейев.

Пушкăрт республикĕ.

Февралĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре Парти вĕренĕвĕн çуртĕнче МОПР йачейки секретарĕсен МОПР активĕпе перле канашлу пулат

КУН ЙĔРКИНЧЕ:

1. Париж коммунĕ пулни 67 çул тултарнă куна (МОПР кунне) хатĕрленсе иртересси çинчен тата МОПР организацин малали задачисем çинчен. (Золотников йулташ доклад тăват)
2. МОПР хула комитет ĕçсен планĕ çинчен. (Тимофейев йулташ доклад тăват).

Парти комитет секретарĕсен, парторгсен МОПР йачейки секретарĕсене тата МОПР активне пухува йамала. МОПР йачейкисем çук çĕрте хăйсен представителĕсене йамала.

ПСК(б)П Хула Комитечĕ.
МОПР Хула комитечĕ.

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

Германире пулса пыракан ĕçсем

Германире политикăлă кризис. Çар министерствине йăлтах улăштарнă, министрсен советне те (кабинета) кăшт улăштарнă.

Халхи кризис хăйĕн тымарĕпе 1934 çулти ийунĕн 30-мĕшĕнче пулнă кризисран инçех каймаст. 1934 çулти ийунĕн 30-мĕшĕнче Гитлер рейсхвер (çар) генералитечĕ хушнине пурнăçа кĕртнĕ, çар ĕçне йертсе пырассине пĕтĕмпех хăй çине илме хăтланнă. Рема тата фашисла партин ытти çулпуçĕсене вĕлерсе пĕтерчĕ. Çапла пулин те, çарăн аслă командованийĕпе фашисла партин руководстви хушинчи çыхăну фашисла партине кăмăллă аталанса пыман.

Германи çарне урăхлатасси çинчен 1935 çулта кăларнă саккун тăрăх, Гитлер çарăн аслă командуйушчи йатне илнĕ, урăхла каласан, президент Гиденбург йатнех илнĕ. Анчах та çарти чăн-чăн влаçа генералитет тытса тăнă, унăн шухăшне çар министрĕн—Бломбергăн çеç мар, рейхсканцлерăн—Гитлерăн та шута илмеле пулнă. Генералитетăн шухăшĕпе ĕмĕчĕ чылай ыйтусем тăрăх Гитлерăн шухăшĕпе, планĕпе килĕшÿлĕ пулман.

Ку тăринччен, Германи фашисĕмĕшĕн хĕсĕк кунсенче генералитет фашисла режима тытса пынă пулсан та, çав вăхăтрах вăл Гитлера хĕсмели вăй пулнă. Гитлер хăйĕн çывăх соратникĕсене вĕлерсе пĕтерес уменхи куна, 1934 çулти ийунĕн 30-мĕшне çеç аса илмеле. Унчухнехи çар министрĕ Бломберг „Фелкшиер беобахтер“ хаçатра статйа пичетлесе кăларнă: Çак статйара Бломберг фашисла парти çара йурăхсăр етемсенчен тасатас политикăна татăклăн тытса пырсан çеç çар хăйне пур ĕçре те пулăшса пырасса шанма пултарат тесе çырнă. Пруççин вată генералĕсем, Германи капиталĕн магначĕсем пекех, Гитлера хăйсен çулпуçĕ тесе шутламаççĕ. Вĕсен шучĕпе Гитлер „халăхшăн“ çеç „фйурер“ (пуçлăх) пулса тăрат. Вĕсем Гитлера йаланах „корол епĕр хушнине пурнăçа кĕртсен çеç пĕччен пуçпулса тăма пултарат“ тесе калаççĕ.

Германи фашисăмĕ Германи капиталĕн чи выçлăх, чи реакцилĕ ушкăнĕ хушнисене çине тăрса пурнăçа кĕртет. Анчах та рабочисемпе ĕçхрĕсченĕсем хушшинче фашисла диктатурăна хирĕç тăрасси ÿссе пыни, çĕршывăн економикăпа финанс хуçалăхĕ начарланса пыни унăн „хуçисене“—капиталиссене ыранхи кун мĕнле пуласси çинчен шухăшлаттарат. Çĕршывра фашисла диктатурăпа килĕшменни ÿссе пыни çар хушшинче те палăрмасăр тăма пултарайман. Генералитет хушшинче те пĕтĕм хуçалăх политикине, çавăн пекех Германин тулти политикине улăштарас шухăш ÿсме тытăннă.

Çапла пулса тăнă: фашиссене влаçа лартнă, унăн диктатурине çирĕплетме пулăшнă рейхсвер айакран пăхса тăракан шутĕнчен тухнă. Генералитет Германин малашнехи çулăн ыйтăвĕ пирки Германи буржуазине йертсе пыракансен ушкăнĕ хушшинче сарăлса кайнă кĕрешÿре активлăн ĕçлеме тытăннă.

Шахт хуçалăх министерĕн ĕçĕнчен отставка тухни фашисăм лагерĕнчи хирĕçÿ çивĕчленнипе кĕрешÿ вăйланнине кăтартакан малтанхи паллă пулнă.

Çак кĕрешÿре вăйсем хăш йенче пулнине пĕлме фашисла диктатурăшăн генералитет мĕнле позици тытни питĕ кирлĕ пулнă. Çар министрĕ Бломберг темĕн пек тăрăшнă пулин те, çара йертсе пыракан генералитет татăклă ыйтусенче, уйрăмăн илсен, çара фашисла пуçлăхсем тунă план тăрăх урăхлатса çенетес ыйтура, килĕшмен. Çарăн главнокомандуйушчийĕ генерал Фрич хăй активлăн хутшăнса ĕçленипе тунă Германи çарĕн халхи структурине улăштарассине питĕ хытă хирĕç тăнă Фрич Пруççирен тухнă çар представителĕсенчен пĕри. Вăл Германин халхи çарĕн организаторĕ 1934 çулти декабĕрте вилнĕ Сект генералăн пултарулă ученикĕсенчен пĕри шутланнă. 1935 тата 1936 çулсенче çĕнĕ çара Гитлер шутланă пек хăвăрт туманшăн Гитлерпа Фрич хушшинче час-часах хирĕçÿсем пулса пынă. Гитлер 1937 çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне 50 дивизи тума хушнă, урăхла каласан, çар шутне вăрçă вăхăтĕнчи хисепе çитерме хушнă. Анчах та, темĕн пек тăрăшсан та, 1936 çулта 36 дивизи çеç тума пултарнă.

Фрич темиçе хутчен те правителствăна докладсем çырса панă. Çав докладсенче вăл пысăк çар тăвассине ытлашши васкатни çар чаçĕсен пахалăхне чакарат тесе шутланă. Фрич Гитлертан хăйĕн тулти политикине Германи çарĕн чăнчăн вăйне шайлă тытса пыма ыйтнă. Фрич тулти политикăн хăрушă та шиклĕ планĕсене кура çар вăйне организацилессине нимĕн шута илмесĕр хăвăртлатма йурамаст тесе шутланă. Германипе Итали интервенчĕсен ĕçĕ Испанире ăнманни, Германин чĕрĕ тавар тата продоволствă йăвăрлăхĕ ÿсни—çĕнĕ лару-тăрура сыхланулă политикă тытма кирлине Фрича тата ытларах ĕнентернĕ. Германи генералитечĕ казармăсенче, салтаксем хушшинче шухăш мĕнлине шута илмесĕр те тăма пултараймап.

Çар хушшинче кăмăлсăрлăх вăйланса çитнĕ. Ахалтен мар ĕнтĕ рейхсвера йертсе пырас ĕçре малашне Фрича тата ун майлă генералсене хăварма хăрушă тесе шутланă.

Йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Нейрат отставкăна тухни, унăн вырăнне Гесспа Геббелсăн çывăх тусне Рибентропа лартни—йутçĕршыв ĕçĕсен министерствине гитлеризацилесе çитернине пĕлтерет. Йулашкинчен Геринг аллине майлă çар специалисĕсене хуçалăх ĕçĕсене лартни Германи хуçалăхне „пысăк вăрçа“ васкаса хатĕрленине пĕлтерет.

Германи правителствинчен Шахт тата Нейрат йышшисем отставкăна тухни—фашисла диктатурă вăрçа васкаса хатĕрленес ĕçри йăварлăхран тухма хăтланса май шыранине пĕлтерет. Вăрçа çар тата хуçалăх йенĕпе çеç мар, дипломати йенĕпе те хатĕрленеççĕ. Риббентроп Английе хирĕçле, Йапонийе майлă тăракан етем. Çавăнпа та Германи правителствинче пулнă улшăнусене Англире лăпкăн кĕтсе илменни пуриншĕн те паллă пулат.

Кунпа пĕрле Германире пулса иртекен ĕçсем фашисла диктатурăн пысăк йăварлăхĕсем пуррине пĕлтерет. Халăхăн пысăк сийĕ фашисла режима хирĕç. Фашиссен çулте тăракан сийĕ Фрича тата итлемен генералсене „çĕнтерни“—Германи фашисăмĕн никĕсĕ хĕсĕнсе çитнине кăтартат.

К. Великанов.
(„Правда“).

Ответлă редактор ĕçĕсене тăвакан
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Академи театрĕнче
февралĕн 10-мĕшĕнче
Чăвашла йубилейла спектакл
ПРЕМЙЕРА
М. ГОРЬКИЙ
„НА ДНЕ“
4 пайлă
Театрăн художествă руководителĕ Йе. Н. ТОКМАКОВ лартат.
Художник Н. Ф. БАЙАКОВ.
Талон № 106. Абонемент №3
Талон № 12.
ДИРЕКЦИ.

РАЙОНРИ КОЛХОЗ ШКУЛНЕ
Сат-пахчи ĕçĕпе тата йалхуçалăх производствине механизацилессипе организацилесси йенĕпе вĕрентме
ПРЕПОДАВАТЕЛСЕМ ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ
Условисем пирки шкула пырсан калаçса татăлма пулат.
АДРЕС: Тĕрлеме, Мускав-Хусан чукун çулĕ, РКШ.
ДИРЕКЦИ.

„Чăваш коммунĕ“ çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха —7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 72 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 88. Тираж 15.500 Б2—94 см. 1—1 п. л.